Чебоксарская
Ц. Б. им. Горького
0

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1938 ЙАНВАР 4 БІТЛАРИКУН
3 (4816)-мӗш №

ЧӐВАШ КОММУНӖ

20-мӗш ҫул тухать ● ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе Тӗпӗҫтӑвкомӗн хаҫачӗ ● Пӗр №-рӗ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСӖ:
Город Чебоксары,
ул. Володарского, 5, Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторӑн 0—67
Ред. заместителӗн 0—88
Редакци секретарӗн 4—40
Дежурнӑйӑн 6—23

Суту-илӳ ӗҫне анлӑн сарар

Ҫӗнӗ ҫула кӗтӗмӗр. Лайӑх вӗҫлерӗмӗр 1937 ҫула. Пур пирӗн мӗнпе савӑнмали, мӗн ҫинчен мухтавлӑн калаҫмали. Чылай фабрик-заводсем хӑйсен планӗсене ӑнӑҫлӑн тултарчӗҫ. Колхозсен амбарӗсем тырпулсемпе тулчӗҫ. Ҫавӑн пекех суту-илӳ ӗҫӗнче те ҫитӗнӳсем тунӑ. Суту-илӳ ӗ... с... рӑлсах пырать. Ҫулленех таварсене ытларах та ытларах сутаҫҫӗ. Чылай магазинсем, йалпосем, ларйоксем, столовӑйсем ҫӗнӗ ҫула хӑйсен планӗсене ытлашшипех тултарнипе кӗтсе илчӗҫ. Пӑрачкав район центрӗнчи магазин таварҫаврӑнӑшӗн ҫулталӑк планне 165 проц., Вӑрмарти магазин—113 проц., Алгашри магазин (Сӗмӗрле р.)—110 процент тултарнӑ.

Ҫав вӑхӑтрах ҫакна каламала: пӗтӗмӗшпе илсен, Чӑвашсойуз иртнӗ ҫулта ҫителӗксӗр ӗҫлерӗ. 1937 ҫулхи таварҫаврӑнӑш планне вӑл 90 процент кӑна тултарчӗ. Ҫул пӗтсе пынӑҫемӗн унӑн ӗҫӗ пушшех йапӑхланса пычӗ. Пӗрремӗш кварталта 101 процент тултарнӑ пулсан, II-мӗш кварталта 90 процент, III-мӗш кварталта—81 проц., IV-мӗш кварталта—80 проц. ҫеҫ тултарнӑ.

Чӑвашторг та мухтанмах пултараймасть. Таварҫаврӑнӑшӗн ҫулталӑк планне пӗтӗмӗшпе илсен тултарнӑ пулсан та, III-мӗшпе IV-мӗш квартал планӗсене тултарайман.

Мӗнре-ха сӑлтав? Суту-илӳ организацисем начар ӗҫленине. Пуҫарулӑх ҫук. Суту-илӳ организацийӗнче сӑтӑрлӑ ӗҫсем тӑвакансемпе, тӑшманла етемсемпе кӗрешӳ си тивӗҫлӗ вырӑнта тӑмасть. Магазинсенче, йалпосенче ӗҫлекенсем хушшинче социалисӑмла ӑмӑртӑва, стахановла йухӑма анлӑн сарман. Пур ҫӗрте те суту-илӳ ӗҫне социалисӑмла хуҫалӑхӑн малта пыракан участки тӑвас, тавар илекенсене лайӑхрах пӑхас, суту-илӳве культурӑлӑ йӗркелес тесе, ҫине тӑрсах кӗрешни сахал. Ун ҫинчен фактсем аван каласа параҫҫӗ.

Мӑн Йавӑш (Вӑрнар р.) йалповӗн лавкисенче прикашчиксем купне мӗн пурӗ те икшер сехет кӑна сутӑ тӑваҫҫӗ. Лавкасенче ӗҫлеме май ҫук, сивӗ. Кипекри лавка, прикашчик пулман пирки, нойабӗр уйӑхӗнче хупӑ ларнӑ.

Пур ӗҫре те ӑнӑҫлӑх сынсенчен килет. Мӗн ӑнӑҫлӑхӗ пулма пултарнӑ Мӑн Йавӑш йалповӗнче? Йалпора тӑшманла етемсем йӑва ҫавӑрнӑ вӗт! Йалпова таварсем кӳрсе килес тӗлӗшпе ӗҫлекен Карпов Сергей—Йермошкӑ йалповӗнчен сӑтӑрла ӗҫсем тунӑшӑн кӑларса йанӑскер. Йалпо прикашчикӗ Маслов пайанхи кун та судпа айӑпланса ирӗксӗр ӗҫлемели шутпа ӗҫлет. Паллах, вӗсем хӑйсем ӗҫне тунӑ ӗнтӗ. Йалпова пӗтерсе лартасси патнех ҫитернӗ вӗсем.

Мӑн Сӗнтӗрти йалпора (Тутаркас р.) шут ӗҫне пӑтраштарса йанӑ. Вӗсем пай укҫи мӗн чухлӗ пухнине те пӗлмеҫҫӗ. Правлени йалпо членӗсенчен член кӗнекисене пухнӑ та, чылайӗшӗнне кӗнекисене сухатса пӗтернӗ.

Вӑрмар районӗнчи Пысӑк Чакӑри йалповӗн прикашчикӗ—Семенов Василий шанчӑксӑр сын, сынсене ултала пӑхать. Шут начар пӗлекенсене пӗрер-икшер тенкӗ улталаса йамасӑр нихҫан та иртермест",—тесе пӗлтерет пирӗн корреспондент Н. Павлов. Ҫакӑн пек тӗслӗхсене темӗн чухлех кӑтартса пама пулать. Вӗсем Чӑвашсойуз начар ӗҫлени, йалпосене кирлӗ пек йертсе пымани, кулленхи пулӑшу ҫукки ҫинчен калаҫҫӗ.

Пур пирӗн аван ӗҫлекен йалпосем те, лайӑх суту-илӳ работникӗсем те. Анчах суту-илӳ организацисен пуҫлӑхӗсем вӗсене курмаҫҫӗ, вӗсен ӗҫне хаклама, ҫӗклеме пӗлмеҫҫӗ, паха опытсене пур ҫӗре те куҫарса пымаҫҫӗ. Кадрсене вӗрентмеҫҫӗ. Йулашки вӑхӑтра Чӑвашсойуз та, Чӑвашторг та хӑйсен ӗҫӗнчи ҫитӗнӳсемпе ҫитменлӗхсене палӑртса тухас, паха опытсене сарас тӗлӗшпе пӗр пӑллӑрах ӗҫ те, пӗр паллӑрах канашлу та туса ирттӗрмен.

Суту-илӳ организацисен умӗнче 1938 ҫулта пысӑк задачӑсем тӑраҫҫӗ. Сталинла виҫҫӗмӗш пйатилеткӑри тапхӑр ҫӗнӗле, пысӑк пахалӑхпа ӗҫлеме ыйтать. Кӑҫал иртнӗ ҫулхинчен нумай лайӑхрах ӗҫлемеле. Суту-илӳ организацисен 1938 ҫулхи пӗрремӗш кварталти таварҫаврӑнӑш планне вӑхӑтчен малтан, ытлашшипех тултарассишӗн кӗрешӗве халех пуҫарса йарас пулать.

Суту-илӳ организацисен пӗр пысӑк чир пур—вӑл растратӑ. Растратӑ пӗтсе пыни курӑнмасть-ха. Вӑл ҫак ҫитменлӗхе пӗтерес тӗлӗшпе кӗрешӳ ҫителӗклӗ марри кӑтартать. Совет суту-илӳвӗнче ӗҫлекенсен уйрӑмӑнах Сталинла Конституцин 98-мӗш статйипе йалан асра тытмала. Унта ҫапла каланӑ:

„ССР Сойузӗн кашни гражданинӗ обществӑлӑ, социалисӑмлӑ харпӑрлӑха,—совет йӗркин чи таса, никам тӗкӗнмеле мар никӗсӗ, хамӑрӑн тӑван ҫӗршыв пуйанлӑхӗпе хӑвачӗн ҫӑлкуҫӗ, мӗн пур ӗҫ ҫыннисен пуйан та культурӑлӑ пурнӑҫӗн ҫӑлкуҫӗ пулса тӑракан харпӑрлӑха,—упраса, ҫирӗплетсе пыма тивӗҫ".

Тӳрӗ ӗҫлени кирлӗ. Суту-илӳ организацисене халӑх тӑшманӗсенчен, сӑтӑрҫӑсенчен, жуликла елементсенчен, ултавлӑ, шанчӑксӑр сынсенчен тасатмала. Пирӗн магазинсенче шӑп та шай тайтармасӑр виҫсе пани ан пултӑр. Тӗрӗс виҫмесӗр, шай тайтармасӑр пани—преступлени. Ку тӗлӗшпе кукӑр аллӑ пулса ӗҫлекен сынсем вальли суту-илӳ ӗҫӗнче вырӑн ҫук. Тавар илекен сын — совет гражданинӗ, вӑл — хисеплӗ, мухтавлӑ. Унӑн правасем пысӑк. Вӑл никама та хӑйӗнчен мӑшкӑлама памасть, памӗ. Вӑл хӑйне пур ҫӗрте те, ҫавӑн пекех сутӑ тӑвакан вырӑнсенче те, кӑмӑлӑ йышӑнса илме, йуратма ыйтать. Тавар илекен сын суту-илӳ организацийӗнчен суту-илӳ ӗҫне культурӑлӑ йӗркелеме, анлӑн сарма ыйтать. Тӗрӗс ыйту, тивӗҫлӗ ыйту вӑл. Ӑна пурнӑҫа кӗртмелех. Партипе Совет организацийӗсен совет суту-илӳвӗ ӗҫне йертсе пырас ӗҫе темиҫе хут вӑйлатмала.

ССР Сойузӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ПСК(б)П Тӗпкомӗнче

Ҫуракине хатӗрленес ӗҫ мӗнле пыни ҫинчен

Ҫуракине хатӗрленес ыйтува пӑхса тухса, ССР Сойузӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ПСК(б)П Тӗпкомӗ ҫак ӗҫ пачах ҫителӗксӗр иртсе пырать, тесе йышӑннӑ.

Тракторсене йусас, горючи илсе кайас, вӑрлӑх хатӗрлесе тасатса хурас тата ахаль вӑрлӑха суртлӑ вӑрлӑхпа улӑштарас ӗҫсем—ҫак кирлӗрен те кирлӗ тата вӑраха йамасӑр хӑвӑрт тумали ӗҫсем пурнӑҫа кӗмесӗрех йулас хӑрушлӑх умӗнче тӑраҫҫӗ.

Вырӑнти органсен тимсӗрлӗхне йе ҫавӑрӑнӑҫусӑрлӑхне пула, ҫуракине хатӗрленес ӗҫ уйрӑмах кӑнтӑр йенчи районсенче (Ростов облаҫӗ, Краснодар крайӗ, Сталинград облаҫӗ, Крым АССР тата ытти те) йапӑх пырать, ҫав вӑхӑтрах кӑнтӑр йенче ҫураки пуҫланиччен кӗске срук ҫеҫ йулчӗ.

ССР Сойузӗ тӑрӑх тракторсем йусас плана 1937 ҫулхи декабӗрӗн 20-мӗшне пӗтӗмпе те 13 процент кӑна тултарнӑ. Плана тултарас ӗҫре пуринчен ытла Чечен-Ингуш АССР (плана 3 процент тултарнӑ), Грузи ССР (6 процент), Ростов облаҫӗ (11 процент), Таджик ССР (7 процент) йулса пыраҫҫӗ. Тракторсене йусанин пахалӑхӗ те ҫителеклӗ мар.

ССР Сойузӗ тӑрӑх акма кирлӗ вӑрлӑхсенчен вӑрлӑх фончӗсем тӑвас плана 1937 ҫулхи декабӗрӗн 15-мӗшне мӗн пурӗ те 76 процент ҫеҫ тата вӑрлӑхсене 18 процент анчах тасатнӑ. Уйрӑмах Орджоникидзе крайӗ (68 проц. вӑрлӑх хатӗрленӗ тата 10 проц. тасатнӑ), Сталинград облаҫӗ (87 проц. вӑрлӑх хатӗрленӗ тата 18 проц. тасатнӑ) йулса пыраҫҫӗ. Чылай ҫӗрте вӑрлӑх фончӗсене йурӑхсӑр вӑрлӑх хывнӑ.

Вӑрлӑхсене колхозсем хушшинче улӑштарас ӗҫе, ҫавӑн пекех ахаль вӑрлӑха государствӑн тата заготзерно... суртлӑ вӑрлӑх фончӗнчи суртлӑ вӑрлӑхӗсемпе улӑштарас ӗҫе тытӑнман та.

Ҫуракине хӗрсе хатӗрленес вӑхӑтра чылай машинӑ-тракторлӑ станцисемпе машинӑ-тракторлӑ мастерскойсем, ҫавӑн пекех тата ҫӗрӗҫ органӗсем йертсе пыракан работниксемсӗр пулнине ССР Сойузӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ПСК(б)П Тӗп Комитечӗ пачах тӳсме ҫук, тесе йышӑннӑ.

Ҫуракине хатӗрленес ӗҫ мӗнле пыни ҫинчен вырӑнти пичетре ҫителӗксӗр ҫыраҫҫӗ. Пичет тракторсем йусас ӗҫ, вӑрлӑх хатӗрлес тата тасатас ӗҫ арканса кайнӑшӑн айӑплӑ сынсене тӑрӑшыв ҫине кӑлармасть тата ҫуракине чи лайӑххӑн хатӗрленес тӗлӗшпе колхозсемпе совхозсенче социалисӑмлӑ ӑмӑрту организацилес ҫӗрте пуҫарса пымасть.

ССР Сойузӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ПСК(б)П Тӗп Комитечӗ сойузлӑ тата автономлӑ республикӑсен Халӑх Комиссарӗсен Совечӗсене, крайсемпе облаҫсенчи Ӗҫтӑвкомсене, Нацилӗ компартисен Тӗпкомӗсен крайкомсемпе обкомсене ҫӳлте кӑтартнӑ ҫитменлӗхсене халех пӗтерме тата ҫак ӗҫсене туса ирттерме хушнӑ:

1) Кӑнтӑр и районсенче виҫӗ кун хушшинче, ҫурҫӗрти районсенче ҫитес пилӗк-ҫичӗ кун хушшинче обком (крайком) бӳровӗпе облӗҫтӑвком (крайӗҫтӑвком) президиумӗн пӗрле пухнӑ ларӑвӗнче ҫуракине хатӗрленес ыйтува сӳтсе-йамала, ҫавӑн пекех вӑл ыйтӑва райком секретарӗсене райӗҫтӑвком председателӗсене тата МТС директорӗсене пухса йетӗрласа тунӑ канашлусенче сӳтсе-йавмала, ҫав канашлусенче ҫуракине хатӗрленес тӗлӗшпе ытларах йулса пыракан районсенчи йертсе пыракан работниксен доклачӗсене итлесе, вӑрлӑхсене сывӑх кунсенчех пӗтӗмпех хатӗрлесе ҫитерме, вӑрлӑх тасатас, улӑштарас тракторсене йусас тата горючисеме илсе пырас ӗҫсене тӑтӑклӑн вӑйлатса йама пултаракан конкретлӑ ӗҫсем туса ирттерме палӑртмала.

Кашни района, районри кашни колхоза вӑрлӑх фончӗсем туса пӗтерме кӗске сруксем палӑртса памала, вӑрлӑх тасатмали ӗҫсене туса пӗтерес тӗлӗшпе ҫирӗп графикпа сруксем памала, ҫавӑн пекех вӑрлӑх улӑштарас тата машинӑ-тракторлӑ станцисемпе совхозсене горючи турттарса пырас тӗлӗшпе конкретлӑ задани памала.

Кашни машинӑ-тракторлӑ мастерскойӗнче тракторсене йусас плансемпе графиксене ҫӗнӗрен пӑхса тухса, тӑваттӑмӗш кварталта тумасӑр хӑварнӑ ӗҫсене йанвар уйӑхӗнче туса ҫитерме тата йусас ӗҫсем йулса пынине йӑлтах пӗтерме хушнӑ.

2) Тракторсене йусанин тата акма вӑрлӑх хатӗрленин пахалӑхне кунсерен ҫирӗп контроль тумала, пахалӑхсӑр йусанӑшӑн тата акмали вӑрлӑха пахалӑхсӑр хатӗрленӗшӗн айӑплисене хайар наказани парасси умӗнче те чарӑнса тӑмала мар.

3) Йанварӗн 5-мӗшӗнчен пуҫласа 15-мӗшне ҫитиччен пур колхозсенче те хатӗрлесе хунӑ вӑрлӑхсен пахалӑхне тӗплӗн тӗрӗслесе тухмала.

4) Кирлӗ пулсан, тракторсене йусанӑ ҫӗрте техникӑлӑ руководствӑ ҫук машинӑ-тракторлӑ мастерскойсене пулӑшма йама хула предприйатисенчи квалификацилӗ рабочисенчен бригадӑсем организалемеле, вӑл бригадӑсене йертсе пыма инженерсемпе техниксене йамала.

5) Кӑнтӑрти районсенче йанварӗн 15-мӗшчен тата ҫурҫӗрти районсенче йанварӗн 20-мӗшчен мӗн пур машинӑ-тракторлӑ станцисемпе мастерскойсене, ҫавӑн пекех районсенчи ҫӗрӗҫ пайӗсене тӗрӗсленӗ йертсе пыракан работниксем тупса памала тата ҫакна пурнӑҫа кӗртни ҫинчен йанварӗн 20-мӗшӗнчен кайа йулмасӑр ССР Сойузӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ПСК(б)П Тӗпкомне пӗлтермеле.

6) Ҫуракине чи лайӑххӑн хатӗрленессишӗн колхозсемпе совхозсен ӑмӑртуне анлӑн организалемеле тата вӑл ӑмӑртува кунсерен кирлӗ пек йертсе пымала. Парти организацисен колхоз активӗпе тата стахановецсемпе тытакан чӗрӗ ҫыхӑнува тӗреклетесси ҫине уйрӑмах ҫавӑрӑнса пӑхмала.

7) Хаҫатсен руководителӗсен большевикла пултарулӑхне тата вӗсем пичет урлӑ практикӑлӑ ӗҫре пулӑшма пӗлнине ҫак ӗҫре тӗрӗслесе, хаҫат редакторӗсене ҫуракине хатӗрленесси тата ӑмӑрту мӗнле пынине кунсерен тата конкретлӑ ҫутатса пыма хушас.

Сойузлӑ тата автономлӑ республикӑсен Халӑх Комиссарӗсен Совечӗсене, крайсемпе облаҫсенчи ӗҫтӑвкомсене, Нацилӗ компартисен Тӗпкомӗсене, крайкомсемпе обкомсене, вӗсем ҫак пӗтӗм ӗҫшӗн ответлӑ пулнине астутарса, ССР Сойузӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ПСК(б)П Тӗпкомӗ вӗсене—кӑнтӑрти районсем тӑрӑх 1938 ҫулхи йанварӗн 10-мӗшӗнчен кайа йулмасӑр ҫурҫӗрти районсем тӑрӑх йанварӗн 15-мӗшӗнчен кайа йулмасӑр—ССР Сойузӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ПСК(б)П Тӗп Комитечӗ ҫӳлте кӑтартса панисене пурнӑҫа кӗртес тӗлӗшпе туса ирттерекен ӗҫсем ҫинчен пӗлтерме хушнӑ, кӑнтӑрти районсем тӑрӑх йанварӗн 15-мӗшӗнчен пуҫласа тата ҫурҫӗрти районсем тӑрӑх йанварӗн 20-мӗшӗнчен пуҫласа ҫуракине хатӗрленес тӗлӗшпе тӑвакан ӗҫсем ҫинчен кашни пиллӗккунлӑхра пӗлтерсе тӑма хушнӑ.

(ТАСС).

Совет Сойузӗн Маршалӗ Семен Михайлович Буденный—ССР Сойузӗн Сойуз Совечӗне депутата Каменец-Подольск облаҫӗнчи Шепетовски суйлав округӗ тӑрӑх суйланнӑ.

(Сойузфото).

Ҫӗнӗ ҫулӑн малтанхи кунӗнче тунӑ ӗҫри ҫӗнтерӳсем

Советсен ҫӗршывӗнчи ӗҫҫыннисем сталинла виҫҫӗмӗш пйатилеткӑ ҫулӗн—1938 ҫулӑн малтанхи кунне ӗҫре пысӑк ҫитӗнӳсем тунипе палӑртрӗҫ.

Магнитогорскри Сталин йачӗпе тӑракан металлурги комбинатӗнчи мелкосортнӑй цехри прокатчиксем талӑк хушшинче 1.042 тоннӑ металл шӑратса кӑларнӑ (задани 856 тоннӑ). 1-мӗш мартен цехӗн коллективӗ, дек. ӗрте комбинатӑн куҫса ҫӳрекен хӗрлӗ йалавне илчӗскер, заданирен иртерсе 537 тонна хурҫӑ шӑратнӑ.

ССР Сойузӗн Аслӑ Совет депутачӗ Смирнов йулташ йертсе пыракан „Сталиноуголь" трест йанварӗн 1-мӗшӗнче, талӑкри плана иртерсе тултарса, 15.270 тоннӑ кӑмрӑк кӑларнӑ.

Сталин йачӗпе тӑракан шахтӑ коллективӗ те ҫав кун лайӑх ӗҫленӗ. 1.547 тоннӑ кӑмрӑк тупнӑ, вӑл талӑкри заданине 118,4 проц. тултарни пулать.

Мариупольри (Украина) Илийч йачӗпе тӑракан металлурги заводӗнче 10 сталевар кӑмакасен техникӑла пултарулӑхне иртерсе ӗҫленӗ.

Краматорскри Куйбышев йачӗпе тӑракан завод металлургӗсем мӗн пур цехсенче заданирен иртерсе ӗҫленӗ. Мартен цехӗ планпа палӑртниччен 141 тоннӑ ытларах хурҫӑ шӑратнӑ. Сталеварсем пурте кӑмакасен техникӑлӑ пултарулӑхне иртерсе йанӑ.

Тельманский МТС (Атӑл ҫинчи Нимӗҫсен республикӗ) ҫӗнӗ ҫул тӗлне, республикӑра никамран малтан, тракторсене йусамали 4-мӗш квартӑл планне тултарнӑ. Планран иртерсе татах 15 трактор йусанӑ. Кӑкармали инвентарсенчен нумайӗш пайне ҫуракине хатӗрлесе ҫитернӗ. МТС коллективӗ йанварӗн 3-мӗшӗнчен кайа йулмасӑр тракторсене тата кӑкармали пӗтӗм инвентаре йӑлтах йусаса пӗтерме обйазательствӑ илнӗ. (ТАСС).

Испанири фронтсенче

(ТАСС-а Парижрен пӗлтернӗ тӑрӑх)

Хӗвелтухӑҫри (Арагонири) фронт

Оборонӑ министерстви пӗлтернӗ тӑрӑх, йанварӗн пӗрремӗшӗнче пӑлхавҫӑсем Теруел участкинче чылай артиллерипе тата авиаципе ҫӗнӗрен атакӑсем тума пуҫланӑ. Республикӑ ҫарӗсен, пӑлхавҫӑсен ытларах вӑййӗ хӗснипе, Конкудран чаксе, вӑл йал хыҫӗнче ҫирӗплетнӗ позицисем патне каймала пулнӑ. Пӑлхавҫӑсем вӑл участкӑра республикӑ ҫарӗсен оборонӑ линине темиҫе хутчен те татса тухма тӑнӑ. Анчах вӗсене республикӑ ҫарӗсем сирсе пӑрахнӑ. Муела де Теруелрен кӑнтӑрала пӑлхавҫӑсем 1.076 текен ҫӳлӗ вырӑн ҫине атакӑлавӑ. Республикӑ ҫарӗсем вӑл вырӑнтан урӑх ҫӗре куҫнӑ. Ҫапах та йанварӗн 1-мӗшӗнче ҫӗрле вӑйлӑ контратакӑ тунипе республикӑ ҫарӗсем вӑл ҫӳлӗ вырӑна каллех йышӑнса илнӗ. Пӑлхавҫӑсем кайран темиҫе хутчен те Теруел патнеле малала тапӑнса пыма хӑтланнӑ. Вӗсене республикӑ ҫарӗсем сирсе пӑрахнӑ.

Тӗп фронт

Пӑлхавҫӑсен артиллерийӗ ыран йанварӗн пӗрремӗшӗ тенӗ чух ҫӗрле Мадрид ҫине 12 хутчен пенӗ.

Кӑнтӑрти фронт

Хаен секторӗнче республикӑ ҫарӗсем Алкала ла Реальрен Прийегона кайакан ҫул участкинче пуҫ пулса тӑракан икӗ ҫӳлӗ вырӑна йышӑнса илнӗ.

Авиаци ӗҫӗ

Йанварӗн 1-мӗшӗнче пӑлхавҫӑсен самолйочӗсем Барселонӑ ҫине бомбӑсем пӑрахса хайаррӑн тапӑннӑ. Бомбӑсем пӑрахнипе ҫынсем вилленӗ. Ку таранччен бомбӑсем пӑрахнипе вилнӗ ҫын кӗлеткисене 60 тупнӑ.

Китайри вӑрҫӑ

Вӑтам Китайра

ХАНЬКОУ, йанварӗн 2-мӗш. Тӗп фронтра лару-тӑру улшӑнмасӑрах тӑрать.

Кӑнтӑр Китайра

ЛОНДОН, йанварӗн 2-мӗш. Ӗнер Йапонин 40 самолйочӗ Кантон тата унӑн таврашӗнчи вырӑнсем ҫине вӗҫсе пырса тапӑннӑ. Кантон—Коулун чукунҫулӗ ҫине питӗ нумай бомбӑсем пӑрахнӑ. Ҫула чылай сийен тунӑ.

Йанварӗн пӗрремӗшӗнче Йапони чаҫӗсем Макаоран ҫурҫӗрелерех Жемчужнайа йуханшывӗ тинӗсе йухса тухнӑ ҫӗрте йӳплесе кайса пулнӑ пӗр утрав ҫине тухма хӑтланнӑ. Вӗсене Китай ҫарӗсем тухма памай. Китай ҫарӗсем ҫавнашкалах тата нумай пулмасть йапонецсем десант антарнӑ Вангун утравӗ ҫинчен (Макаоран кӑнтӑраларах) Йапонин икҫӗр морйакне хӑваласа кӑларнӑ.

Гуандун провинцинчи чылай районсенче ҫирӗп укрепленисем тӑваҫҫӗ. Халӑх хушшинче темиҫе вуншар винтовкӑ валеҫсе панӑ. Халӑха кашни кунах ҫар ӗҫне массӑлӑн вӗрентеҫҫӗ.

(ТАСС).

Йапони агреҫҫийӗ

ТОКИО, йанварӗн 2-мӗш. Домей Цусин агенстви Шаньдун провинцинче Йапони ҫарӗсем Тайан хуливе (Цзинанрен 50 километр кӑнтӑр йенче) йышӑнса илнӗ, тесе ҫирӗплетет. Ҫапӑҫусем Цзинанрен хӗвелтухӑҫнелерех, Цзиндао порчӗ патнеле кайакан чукунҫулӗ тӑрӑх пыраҫҫӗ.

(ТАСС).

Горьки облаҫӗ ҫуракине хатӗрленни

Ҫак кунсенче ПСК(б)П Обкомӗ Облаҫри ҫӗрӗҫ управленин начальникӗн тата МТС директорӗсен доклачӗсене итлесе сӳтсе йавнӑ. Докладсенчен тракторсене ремонтласси облаҫра начар пурнӑҫа кӗрсе пыни паларнӑ. Ӗҫ ҫавӑн пек начар пынин сӑлтавӗ МТС, МТМ директорӗсем тата вӗсен заместителӗсем ремонт тӑвакан сынсемпе тивӗҫлӗ ӗҫлеменнинче пулать, тесе палӑртнӑ Обком. Директорсем ремонт ӗҫӗнчи рабочисен ӗҫне тӗрӗс организацилемеҫҫӗ, вӗсен пурнӑҫ условийӗсем ҫине тивӗҫлипе ҫавӑрӑнса пӑхмаҫҫӗ, стахановла йухӑма начар йертсе пыраҫҫӗ.

Ремонт пахалӑхне ҫӗклесси ҫине МТС тата МТМ работникӗсем кирлӗ пек тимлӗн ҫавӑрӑнса пӑхманнине те палӑртнӑ Обком. Ремонт пахалӑхне тӗрӗслеме районсене Обком Горьки хулинчен 15 механик йама йышӑннӑ.

МТС тата МТМ-сем пӗтӗмӗшпе начар ӗлеҫҫӗ пулин те, ремонт тӑвас ӗҫре ҫӳлӗ стахановла тӗслӗхсем паракан рабочисем те чылай. Обком ремонт ӗҫӗнче пысӑк ӗҫ тухӑҫлӑхӗ кӑтартнӑ стахановецсемпе ударникӗсене премисем пама йышӑннӑ.

Обком райкомсемпе райӗҫтӑвкомсене тракторсем сумне кӑкарса ӗҫлемели инвентарсене ремонтласси ҫине те кирлӗ пек ҫавӑрӑнса пӑхма кӑтартса хӑварнӑ.

Йанварӗн 8-мӗшӗнче МТС директорӗсен канашлуне пухма йышӑннӑ. Вӑл канашлура кашни МТС 1937 ҫулти ӗҫне уйрӑмӑн хак параҫҫӗ.

* * *

Колхозсенче ҫуракине хатӗрленес ӗҫ вӑйланса пырать. Анчах халӗхе уйрӑм ударниксем кӑна паларӑҫҫӗ-ха. Починкӑ районӗнчи „Майӑн 1-мӗшӗ" йалхуҫалӑх артелӗн членӗ Федорин йулташ, тислӗк купалас ӗҫре ӗҫлесе, нормӑна 330 процент тултарса пырать, чылай чухне пӗр кунтах 15-шер ӗҫкунӗ тӑвать. Шльапникова Ковылев колхозниксем тислӗк турттарас ӗҫре нормӑна 200-шер процент тултарса пыраҫҫӗ.

Ҫав районрах „Новый путь" колхозри вӑрлӑх тасатакан звено 4 тоннӑ вырӑнне 8,5 тоннӑ трийорласа пырать.

Варнавино районӗнчи колхозниксем арзамасцӑсемпе ӑмӑртса ӗҫлеҫҫӗ. Сӗре семҫетме торф хатӗрлес ӗҫ хӗрӳлӗн пырать. Районра пӗр кунта 113 тоннӑ, 93 тоннӑ, 35 тоннӑ торф хатӗрлекен колхозниксем нумай. Вӗсен шутне „Колос" колхоз членӗсем Лукойанов, Хрычев, „Красный луч" колхоз колхозникӗ Шиоайев т. ыт. те кӗреҫҫӗ.

Ҫав районрах Звернихински йалсоветӗнчи парторганизаци ҫуракине хатӗрленес ӗҫе хӗрӳлӗн хутшӑннӑ. Коммунистсем колхозниксем хушшинче массӑлӑ ӑнлантарулӑ ӗҫе сарсах пыраҫҫӗ. Ку йалсоветӗнче пур колхозсем те тенӗ пекех йалхуҫалӑх инвентарӗсене ремонтласа пӗтернӗ. Колхозсем халӗ социалисӑмла ӑмӑртува сарса йама ӑмӑрту договорӗсем тӑваҫҫӗ.

Колхозсем 1938 ҫулта гектартан, вӑтамӑн илсен, 20 центнертан кайа мар тӗштырӑ пуҫтарма пулса обйазательствӑсем илеҫҫӗ.

(„Горьковская коммуна"-тӑрӑх).

Тырпулсене валеçесси политикăла пысăк ĕç

Колхоз çулталăк ĕçлесе илнĕ тырпула тата ытти тупăшсемпе мĕн-мĕн тумалли çинчен йалхуçалăх ертелĕн уставĕ çинче, 11-мĕш пунктра тĕплĕн кăтартса панă.

„Пухса илнĕ тырпулран тата выљăх-чĕрлĕх усрас ĕçрен илнĕ тупăшран ертел:

а) государствăна тырпул тăратас тата кивçен илнĕ вăрлăха таварса парас обйазателствăсене тултарать, МТС-па тунă саккун пекех хисепленекен договор тăрăх, МТС туса панă ĕçсемшĕн тӳлесе тарать, тата контрактаци договорĕсене тултарать;...

б) вăрлăх валљи тата выљăх-чĕрлĕхсене çулталăк хушши çитермелĕх тырă хывать, çаплах тата тырпул пулмасран сыхланас тĕлĕшпе, вăрлăх тата выљăх-чĕрлĕх апачĕ валљи тивмело мар фонд тăвать...

в) пĕтĕм ертел пухувĕ йышăннă тăрăх инвалидсене, ватă çынсене, вăхăтлăха ĕçлеме пултарайман çынсене, пулăшу кирле красноармейцă çемйисене пулăшма, ача-пăча йаслисене тата тăлăхсене усрама пулăшу фончĕсем тăвать, çав фондсене пухса илнĕ продукцирен 2 процентран ытла хывмала мар;

г) ертел членĕсен пухувĕ кăтартса панă таран, продуктăсенчен государствăна йе пасара сутма уйăрса хăварать;

д) ертел хăйĕн ытти тыррине тата выљăх-чĕрлĕхрен илнĕ тупăшне пĕтĕмпех ертел членĕсен хушшинче ĕçкунĕсем тăрăх валеçет".

Колхоз тыррине тата тупăшне валеçмелли йĕрке çапла ĕнтĕ. Çапла йĕркепе валеçеççĕ те. Анчах та, йалкорсем пĕлтернĕ тăрăх, хăшпĕр колхозсенче çав йĕрке çинчен правленисем манса кайни курăнать. Йе тата хăшпĕрисем государствă умĕнчи обйазателствăсене вăхăтра тултармасăр тăрса тырпулсене валеçес ĕçе чăтма çук вăрăма йараççĕ. Тĕрĕссипе илсен ку та вара йалхуçалăх ертелĕн уставне пăхăнмасăр ĕçлени пулса тăрать. Колхоз правленийĕсем, „Пучах" колхозри пек (Вăрнар р.) тырпулсене вăхăтра валеçеймесĕр колхозниксене тырăсăр лартаççĕ пулсан, „Самољот" колхозри пек (Елĕк р.) çĕрулмисене шăнтса йарса колхозниксене çĕрулмисĕр хăвараççĕ пулсан, ку вара колхозниксем умĕнче пысăк преступлени туни пулса тăрать.

Пĕтĕмĕшпе илсен, тырпулсемпе тупăшсене валеçес ĕç кăçал чылай колхозсенче вăрăма кайрĕ. Паллах, кушăн районри организацисем те айăплă, тырпулсемпе тупăшсене ĕçкунĕсем тăрăх валеçес ĕçре вĕсем çителĕклĕ йертсе пыман. Çавăн пекех Чăваш Çĕрĕç халăх комиссариачĕ çинчен те каламала. Тырпулсене валеçес ĕç пуçланас умĕн Çĕрĕç халăх комиссариачĕ çав ĕç тĕлĕшпе ĕçлекен работника (Архипов) отпускăна йанă.

Колхозсенче тупăшсемпе тырпулсене валеçес ĕçе малала татах вăрăма тăсиппе чăтма çук. Пурпĕ те паллă, 1937 йалхуçалăх çулне вĕçлесе çитерейменпи 1938 çулхи тырпулшăн кĕрешес ĕçе пуçарса йама чарса тăрать. Çавăнпа парти тата совет организацийĕсен çак политикăла пысăк вырăн йышăнса тăракан ĕç çине çак кунсенче уйрăмăнах çавăрăнса пăхмала. Йулса пыракан колхозсене конкретлă пулăшу парса, тырпулсемпе тупăшсене валеçес ĕçе халех туса çитермело.

Председател те, ревизи комиççийĕ те ĕçе хăвăртлатма тăрăшмаççĕ

„Пучах" колхоз (Вăрнар р.) кăçал пур тĕрлĕ ĕç йенчен те районта кайа йулса сĕтĕрĕнсе пыракан колхоз пулса тăчĕ. Тырпул тухăçĕ лайăх пулнă пулсан та, „Пучах" колхоз пайан куна çитичченех государствă умĕнчи обйазателствăсене тултарайман—çĕрулми, купăста, утă тата тырă парса татман. Çавăн [illegible] тырпулсене ĕçкунĕсем тăрăх валеçесси те тытăнса тăрать. Колхоз ампарĕсенче тырă нумай выртать, анчах колхозниксем тырăсăр лараççĕ. Хăшпĕр колхозниксен аванс шучĕпе илнĕ тырă та пĕтнĕ, çавăнпа вĕсен хаљ çиме те тырă çук.

Çаксем пĕтĕмпех колхоз председателĕпе ревизи комиççи председателĕнчен килеççĕ. Колхоз председателĕ И. Иваков йулташ государствă умĕнчи обйазателствăсене вăхăтра тултарма тăрăшмасть. Ревизи комиççи председателĕ колхоз тупăшне шутласа кăларнă итогсене тĕрĕслеместь.

1937 йалхуçалăх çулне вĕçлесе çитерейменпирки колхоз хаљ 1938 çулхи тырпулшăн кĕрешес ĕçе те пачах тытăнман.

П. Арсентйев.

Тупăшсене валеçес ĕç вăрăма кайать

Вăрмар районĕнчи „Делегатка" колхозра тырпулсемпе тупăшсене валеçесси çинчен мансах кайнă темеле. Правителствă йышăннă тăрăх тырпулсене ĕçкунĕсем тăрăх декабĕрĕн 20-мĕшне валеçсе çитермеле пулнă пулсан, „Делегатка" колхозра йанварĕн 20-мĕшне те валеçсе пĕтересси курăнмасть, мĕншĕн тесен колхоз председателĕ Тимофейев йул. ку ĕç çине çавăрăнса та пăхмасть. Соловйов.

Ишлей районĕнчи, Анаткас Мар кари „Правда" колхоз правленийĕ колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх тырпулсем валеçсе пама пĕртте васкамасть. Ку ĕçе декабĕрĕн пуçламĕшĕнчех туса çитерме май пулнă пулсан та, хаљ те тытăнман-ха Çавăн пирки пĕр сарайа хунă çĕрулми шăнса, çĕрсе пĕтнĕ.

Й. Йамашев.

Вăхăтра валеçмесĕр шăнтса йачĕç

Елĕк районĕнчи „Самољот" колхозра 1937 йалхуçалăх çулне вĕçлесе çитересси чăтма çук вăрăма кайрĕ. Колхоз хаљ те клевер çапса пĕтереймен. Клевер кĕлтисем йур айĕнче выртаççĕ. Колхозри учот ĕçĕнче вара ним йĕркелĕх те çук. Çавăнпа та тырпулсене ĕçкунĕсем тăрăх валеçес ĕç те вăрăма кайрĕ. Ку çеç те мар. Çĕрулмисемпе тымарçимĕçсене вăхăтра валеçмен пирки, хаљ сивĕпе чылай çĕрулми тата кишĕр шăнса пăсалчĕ. Çавăн пекех сăс-кантăра вăхăтра валеçсе паман пирки, хаљ чылай сăс-кантăр çухалса пĕтнĕ.

Çак ĕçсемшĕн пĕтĕмпех колхоз руководителĕсем айăплă. М.

Чăваш республикинчи МТС-сенче тракторсене йусас ĕç 1938 çулти йанварĕн пĕрремĕшне мĕнле пынине кăтартакан Çĕрĕç халăх комиссариачĕн СВОДКИ

Районсем	СТЗ—ХТЗ тракторсене йусасси: IV-мĕш кварталăн планĕ: Капиталлă ремонт	IV-мĕш кварталăн планĕ: Вăтам ремонт	Плана тултарнă: Капиталлă ремонт	Плана тултарнă: Вăтам ремонт	ЧТЗ тракторсене йусасси: IV-мĕш кварталăн планĕ: Капиталлă ремонт	IV-мĕш кварталăн планĕ: Вăтам ремонт	Плана тултарнă: Капиталлă ремонт	Плана тултарнă: Вăтам ремонт	План тултарни (проц-па): IV-мĕш квартал планĕнчен	Кĕркунне тата хĕлле йусамалли планран
Улатăр	6	6	5	5	1	2	—	—	83,3	38,4
Елĕк	2	14	4	8	—	—	—	—	75,0	25,0
Патăрйел	6	14	14	1	—	1	—	—	75,0	28,6
Вăрнар	6	10	9	8	—	1	—	1	106,0	58,0
Йĕпреç	5	5	7	10	—	1	—	—	154,5	51,5
Ишлей	—	18	—	15	—	—	—	—	83,3	83,1
Канаш	6	5	6	—	—	1	—	—	54,6	28,5
Куславкка	—	18	—	22	—	—	—	—	122,2	52,8
Кувакинă	7	12	8	4	—	1	—	—	63,1	23,8
Пăрачкав	10	13	8	4	1	1	—	—	52,0	21,0
Тутаркас	—	20	—	10	—	—	—	—	50,0	24,4
Трак	11	15	11	8	—	—	—	—	53,0	28,7
Вăрмар	3	10	3	6	1	2	1	—	70,0	20,5
Çĕрпӳ	6	13	7	4	1	1	1	—	60,0	22,0
Шупашкар	—	17	—	2	—	—	—	—	18,0	8,0
Шăхасан	11	9	9	13	1	2	1	2	110,0	55,0
Йелчĕк	11	15	5	9	—	1	—	—	55,0	23,7
Тăвай	11	16	9	7	—	1	—	—	63,5	40,0
Пĕтĕмпе	100	231	105	138	5	15	3	3	71,4	30,4

Çĕрпӳ хулинчи Колхозник çурчĕ

Çĕрпӳ хулине ĕçпе пыракан çынсем валљи кĕрсе выртма халиччен хватер пулман. Халĕ нумай йах пулмасть хĕрлĕ плошчĕд çывăхĕнче 30—40 çын вырнаçмалăх Колхозник çурчĕ туса лартнă. Çурт таса та çутă. Партипе правителствă руководителĕсен портречĕсемпе тата лозунгсемпе капăрлатнă. Кĕрсе выртакансене вулама хаçат-журналсем те пур.

Е. Карташов.

Колхоза кĕчĕç

Шăнкăртам. Хирти Пикшикри „Осоавиахим" колхоз çуракине хатĕрленме тытăнчĕ. Хаљ вăрлăхсене суртлă вăрлăхсемпе улăштараççĕ. Кашни кунах уйа тислĕк кăлараççĕ. Ку ĕçсенче йалан 10 лаша ĕçлет.

Çуракине хатĕрленнĕ май 6 хуçалăх колхоза кĕчĕç. Кужиков

126 çул тултарчĕ

Хусанти государствă университетĕн метеорологи обсерваторине организацилени кăçал йанварĕн 1-мĕшĕнче 126 çул тултарчĕ. Метеорологи обсерватори 100 çул хушши ытла Хусанти климăта сăнаса пырать. Климăта сăнасси чи малтан 1733 çулхине, Российăри ăслăлăх академийĕ çурçĕрти експедицине организациленĕ майăн, пуçланнă. Çак експедици ĕçе 10 çула тăсăлнă. Климăта чи малтанах сăнама пуçлаканĕ Хусан хули шкулĕн Кувицын Семен йатлă учителĕ пулнă. Ун чухне унăн аллине климăта сăнамали барометр, термометр тата çил вăйне пĕлекен инструментпа компас çеç пулнă.

Обсерватори [illegible] питĕ вăйлăланать. Халĕ обсерватори кашни кун тĕрлĕ учреждениcемпе ăслăлăх организацийĕсене тата предприйатисене темĕн чухлĕ справкăсем парса тăрать. Кунсăр пуçне метеорологилĕ приборсене тĕрĕслесе паспортсем парать. Обсерваторин ăслăлăх работникĕсем климăта сăнас тĕлĕшпе Хусанти медицинă институтне те пысăк пулăшу парса тăраççĕ. Вĕсем Хусан таврашĕнчи ӳсен-тăрансене сăнама пулăшаççĕ т. ыт. те.

Йулашки вăхăтра метеорологи обсерватори хăйне валљи пысăк приборсем туйаннă: çил вăйне регистрациленĕ чух температурăна йаланах тытса тăмали пысăк термостат тата пĕлĕтсене сăнаса пĕлмели нефоскопсем илнĕ.

Обсерваторин çамрăк ăслăлăх работникĕсем климăт улшăнăвне сăнаса пырассипе ытти çамрăк ăслăлăх работникĕсемпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Фотоелементсем тăрăх хĕвеле сăнаса вĕренеççĕ.

Обсерватори хăйĕн ăслăлăх ĕçĕсем çинчен бӳллетенсем кăларать.

Наган Васлейĕ.

Çĕмĕрлери „Бољшевик" заводри кочегар-стахановец Семен Федорович Идобайев.

Цыганов фото-ӳкерчĕкĕ.

Çуракине хатĕрленес ĕçе пĕр куна та вăраха йамала мар

(Çĕрпӳ районĕнчи йалхуçалăх ĕçĕнчи стахановецсен канашлăвĕ)

ÇĔРПӲ (хамăр корр.). Декабĕрĕн 31-мĕшĕнче уйхир стахановецĕсемпе стахановкăсен тата ударниксен районри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу 1937 йалхуçалăх çулĕн итогĕпе 1938 çулхи çуракине хатĕрленес ĕçĕн задачисем çинчен сӳтсе-йаврĕ.

Иртнĕ çулта „Гектар çинчен 100 пăтран кайа илекен пĕр колхоз та пулмала мар" тенĕ лозунга районри колхозсем вăйлă тырпул туса илсе, ĕçре кăтартрĕç. Гектартан 150 пăтшар илнĕ колхозсем районра вуншарăн шутланаççĕ. Акă „Верный путь" колхоз 18 гектар çĕр çинчен гектар пуçне ыраш вăтамран 217 пăт, 15 гектар çинчен вăтамран çурхи тулă 160 пăт туса илнĕ. Çавăн пекех „Шурăмпуç", „Çĕнĕ вăй", „Молот", „Красный бригадир" „Ĕмĕт", Ворошилов йачĕпе тăракан колхозсем те вăйлă тырпул туса илес ĕçре аван тĕслĕхсем кăтартрĕç.

„Молот" колхоз иртнĕ çулта çĕрулми лартмали вырăна опытсем туса пăхнă пулнă. Çĕрулми лартас вырăна гектар çине 5 центнер кĕл сапнă, тепĕр гектарĕ çине сапмасăр лартнă (условисем пĕр пек пулнă). Кĕл сапнă çĕр çинчен çĕрулми 170 центнер, сапман çĕр çинчен 152 центнер çеç тухнă.

Тата кали тăварĕпе тепĕр опыт туса пăхнă (условисем пĕр пек). Калљи тăварне пĕр гектар çĕр çине 6 центнер сапнă. Ку çĕр çинчен çĕрулми 233 центнер, сапман çĕр çинчен 159 центнер кăна туса илнĕ.

—Манăн çемйере 10 çын, вĕсенчен ĕçлеме пултаракансем арăмпа иксĕмĕр кăна. Ачасем шкулта вĕренеççĕ. Арăмпа иксĕмĕр ĕçлесе иртнĕ çулта 370 ĕçкунĕ турăмăр. 370 ĕçкунĕпе 180 пăт тĕштыра илтĕмĕр. Епĕ ĕçлеме ӳркенсе тăмастăп. Колхозра ĕçленĕ вăхăтрах епĕ чукунçул строителствинче, йăлăмра вăрман касна çĕрте те ĕçлерĕм. Чукунçул строителствинче пĕр пĕччен 643 кубла метр тăпра чавса [illegible]. Колхоза кĕнеренпе ĕçлес хаваслăх манăн кунран-кун ӳсе пычĕ. Халĕ ĕнтĕ епĕ 2 ĕне, 4 сысна, сурăх, хур-кăвакал усратăп.

Хамăр йалта 8 кӳлĕ чавтартăм. Кӳлĕн усси питех те пысăк. 1930 çулта пирĕн йалта хур-кăвакал усракан мĕн пурĕ те 3 хуçалăх çеç пулнă. Йалта кӳлĕ тунăранпа 24 хуçалăх хур-кăвакал усрать. Кӳле пуличчен пахча-çимĕç продукцине пирĕн йалсем Çĕрпӳ базарĕнче илсе пурăннă пулсан, халĕ сутлăх та тăваççĕ ĕнтĕ. 1930 çулхипе танлаштарсан пахча-çимĕç тупăшĕ туса илесси 90 процент хăпарчĕ. Çапла вара колхоза кĕнеренпе йалти пурнăç йалтах улшăнчĕ. Иртнĕ çулта епĕ икĕ гектар çĕр çинче опыт туса пăхрăм. Пĕр гектарĕ çинче агрономи кăтартнă пек ĕçлерĕм. Çавăн пек ĕçленипе гектар çĕр çинчен 24,2 центнер, тепĕр гектарĕнчен 30 пăт кăна тухрĕ. Кĕлпе те усă курма пĕлни кирлĕ. Вăл та тырпул тухăçлăхне хăпартас ĕçре нумай пулăшать. Тырпула апат парать. Кĕл сапнă çĕр çуркаланмасть, çĕр çуркаланман вырăнта нӳрĕ ытларах тăрать. Çавăнпа та пирĕн кашни колхозник хуçалăхĕнех тислĕк, кĕл ытларах пухма тăрăшас пулать. 1938 çулхи çуракине хатĕрленнĕ май, епĕ хам хуçалăхра кăçал 32 тонна тислĕк, 1,5 тоннă фекали, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ тата улам кĕле те пухма тăрăшатăп. Фекалине епĕ çулла та пухнă, хĕлле те пухатăп. Çĕнĕ çула епĕ государствă умĕнчи парăмсене парса татнипе кĕрсе илтĕм,—тет „Елаш" колхозри стахановец Коновалов йулташ.

Ун хыççăн „Çамрăк вăй" колхозри уйхир ĕçĕн ударници Петрова, МТС директорĕ Йермаков, Григорйев, Теренгйев тата ытти йулташсем тухса калаçрĕç.

Канашлу Çĕрпӳ районĕнчи колхозсенче çуракине хатĕрленес ĕç çителĕксĕр пынине палăртрĕ. 1938 çулта вăйлă тырпул туса илессипе канашлăва пухăннă йулташсем хăйсем çине татăклă [illegible] илчĕç.

Мих. Йаковлев.

Тивĕçлипе хатĕрленмеле

ЙĔПРЕÇ. 1938 çулхи çуракине хатĕрленес ыйтупа районра декабĕрĕн 25-мĕшĕнче йалсоветсемпе колхоз председателĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура ПСК(б)П Обкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулхи çуракине хатĕрленесси çинчен йышăннă постановленине сӳтсе-йаврĕç. Çакăн хыççăн парти райкомĕпе райĕçтăвком çуракине хатĕрленес ĕçре пулăшма районри парти активне йалсоветсемпе колхозсене кăларса йачĕç.

Райçĕрĕç пайĕн планĕ тăрăх 1938 çулта районĕпе 70 пин лав тислĕк, 9.200 тоннă торф, 3000 центнер кĕл хатĕрлемеле, 4.500 тоннă çырмари йушкăн уйа кăлармала, 8.200 гектар çинче йур тытмала, 99 тоннă минераллă çăнăхсем кӳрсе килмеле.

Хăшпĕр колхозсем вăйлă тырпулшăн кĕрешӳ пуçарса йанă та ĕнтĕ. Агротехникăлă ĕçсем йенĕпе конкретлă плансем туса, вăл плана пурнăçлассишĕн бољшевикла кĕрешеççĕ. Çак йенчен „Хĕрлĕ Октабĕр" колхоз малти вырăнта тăрать. Колхоз председателĕ Д. Йегоров йалхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçленĕ хыççăнах, колхозниксене 1938 çулхи сталинла вăйлă тырпулшăн кĕрешӳве мобилизациленĕ.

Колхозниксем хĕрсех Йĕпреç станцинчен тислĕк, фекали турттараççĕ, 30 центнер фосфорит çăнăхĕ хатĕрлемеле пулнă пулсан, вĕсем 15 тоннă кӳрсе килнĕ.

Декабĕрĕн 28-мĕшĕнче колхозниксен пухувĕ пулса иртрĕ. Унта 1938 çулхи çуракине хатĕрленесси çинчен сӳтсе-йавнă хыççăн, колхозниксем пурте пĕр сăмахпа йанвар уйăхĕнче çуракине хатĕрленес ĕçри агротехникăлă ĕçсене туса çитерме йышăнчĕç. Çуракине бољшевикла хатĕрленессипе Крупскайа йачĕпе тăракан колхоза социалисăмла ăмăртува чĕннĕ.

Шăртанти „Шурăмпуç" колхоз та çуракине хĕрсех хатĕрленме тытăнчĕ. Çураки валљи 170 центнер сĕлĕ, 30 центнер викă, 118 центнер тулă вăрлăхĕ кирлĕ пулать. Вăрлăхсене уйăрса хунă, суртлама тытăннă. Пайанхи куна 60 центнер сĕлĕ вăрлăхĕ суртланă. Колхозăн тулă вăрлăхĕ акма йурăхсăр пирки, „Социалисăм" колхозран суртлă тулăпа улăштармала. Анчах „Социалисăм" колхоз тулă çапман пирки, улăштарас ĕç чарăнса тăрать.

Нумай пулмасть йалхуçалăх машинисем йусавлипе йусавлă маррине тĕрĕслесе пăхнă. Тĕрĕслӳ хыççăн 1 çейалкă, 10 плуг йусавсăрри палăрнă. Ытти машинăсем пурте йусавлă. Йусавсăр машинсене йусама тытăннă.

Çĕре çемçетмели вырăнти йапаласене хатĕрлес ĕçе те аван йĕркеленĕ. Уйа 600 лав тислĕк кăларнă, 50 лавлăх компост тума хунă. Çак кунсенчех минераллă çăнăхсене кӳрсе килес ĕçе пуçăнаççĕ. Минераллă çăнăхсем илме 1.000 тенкĕ ытла укçа куçарнă.

Çуракине хатĕрленес ĕçре паха тĕслĕхсене кăтартакан колхозсем татах та пур. Акă, Кĕлĕмкассинчи „Хĕрлĕ фронтовик" колхозри вăйлă тырпул звенин звеновочĕ Степан Йефицов й. 1938 çулхи вăйлă тырпулшăн чăн-чăн бољшевикла кĕрешӳ пуçласа йанă. Йефицов й. звени ку тарана çитсе 775 центнер вăрлăх суртланă, 155 пăт кĕл пухнă, 555 лав тислĕк кăларнă, 209 центнер тĕрлĕ минераллă çăнăхсем кӳрсе килнĕ.

Чылай колхозсем çуракине хатĕрленессипе çине тăрса ĕçлеççĕ пулсан та, çав вăхăтрах çураки ыйтăвĕпе нимĕнле ĕçсем туман колхозсем те сахал мар. Уйрăмăнах йалхуçалăх машинĕсене йусас, вăрлăх фончĕсем уйăрас, суртлас, суртлă вăрлăхсене улăштарас ĕçсем кайа йулса вăрăма кайса пыраççĕ. Йалхуçалăх машинĕсене „Интернационал", „Красный фронтовик", „Хĕрлĕ çăлтăр" колхозсемсĕр пуçне, нихăш колхозра та йусама тытăнман. Вăрлăхсене 29 колхозра çеç уйăрса хунă. „Çĕнĕ пурнăç" колхозра вăрлăх фончĕ уйăрса хăварас ĕçре йалхуçалăх ертел уставĕнчен иртĕнме пăхнă. Вăрлăх фончĕ уйăрса хумасăрах тырпулсене ĕçкунĕ тăрăх валеçме тытăннă.

Суртлă вăрлăх улăштарасси пушшех те йапăх пырать. Пайанхи куна суртлă вăрлăх улăштарас плана 2,6 процент çеç пурнăçланă. „Мăрат", „Путиловка", „Бољшевик", „10 лет Октября" т. ыт. колхозсем суртлă вăрлăх улăштарма васкамаççĕ.

Дм. Михайлов.
Гл. Марушев.

Лига наци çинчен

Пулăшки вăхăтра Йевропăри пичет страницисенче час-часах Лига наци çинчен çырма тытăнчĕç. Итали Лига нацирен тухнине пĕлтернĕ май, фашиссен хаçачĕсем Лига „кризиса" кĕрсе ӳкрĕ, „банкрута" тухрĕ, тесе кăшкăрма тытăнчĕç. Пољшăн йутçĕршыв ĕçĕсен министăрĕ Бек питех те мăшкăллăн калаçма тытăнчĕ, вăл Лига нацине „консуљтацисем паракан тата хирĕçекенсене çураçтаракан" оргăн туса хума хушать, çапла майпа мирлĕх орудийĕ пулса тăракан Лигана пĕтерес лартасси патнелле туртать. Швейцари президенчĕ Мотта та Швейцари нейтралитечĕ çинчен сӳпĕлтетсе тухса каласа, хăйĕн чĕрипе Лигана тантама васкарĕ.

Пурне те паллă, Швейцари Лига „мне шанăкăсăртараххăн, пĕрлешрĕ. Халĕ Мотта, тĕрĕссипе каласан, Швейцари Лига наци пакчĕнчен пĕтĕмĕшпех уйăрăлнине пĕлтерет. Чăнах та, вăл Швейцари формаљнă Лигаран тухма шутламасть, тесе асăрхаттарса хăварчĕ. Анчах ăна лайăхах ăнланма пулать: Швейцари Лигаран тухсан, Лига ăçта вырнаçас çĕнĕ ыйту тухма пултарать, вăл Женевăри отелсем тата трактирсем тытакансен кăсйине пырса çапма пултарать.

Лига наци малала мĕнле пуласси çинчен тăракан ыйтупа Францири хаçат „Тан" та—Францири йăвăр промышленнăç пĕрлешӳвĕн оргăнĕ—çырма тытăнчĕ.

Çын вилсен пытарнă чухне каланă пек, хуйхăлăн „Тан" Лига наци „саланса" кайни çинчен... тезис туртса кăларнă. „Тан" кăтартнă тăрăх, Лига наци çакăн пек „саланса" кайнин тапхăрĕсем çаксем пулнă: Йапони Манчжурине йарса илни, Гитлер Рейн зонине туртса илсе милитаризацилени. Итали Абиссинине хирĕç вăрçни тата Йапонин Китайри агрессийĕ.

Тĕрĕс ĕнтĕ, паллах, çав вăрçăсем пынă вăхăтра пур чухне те Лига наци йенчен агрессора çирĕп отпор пани пулман, çавă вара Лига нацине çирĕплетмерĕ те, унăн авторитетне те çĕклемерĕ. Анчах, çав ĕçсене кăтартса, „Тан", çапах та, çакăн пек ыйтăва лартмасть: мĕншĕн Лига наци агрессора çирĕп ответ пама пултараймарĕ тата çак ĕçре Францин хăйĕн политики мĕнле вырăн йышăнса тăчĕ.

Паллă-çке-ха, Йапони Манчжурийе пĕр айăпланмасăр туртса илни Гитлера Рейн зонине туртса илме хĕтĕртсе пычĕ. Çак икĕ ĕçре те Франци хăйне мĕнпе палăртрĕ? Францири сылтăм пичет йаланах тĕрĕсе тухма тăрăшса кăтартнă пек каласан, Францирен Манчжурине инçе тейĕпĕр, апла пулсан, Рейн зони Франци чикки патĕнчех выртать ĕнтĕ. Халĕ пуриншĕн те паллă, Гитлер зонăна туртса илме хăранă, Германи генераљнăй штабĕ çавăн пек тăвассине хирĕç тăнă, Франци сăмахпа кăна мар, кăшт çеç те пулин ĕçпе хирĕçме тытăнсан, Рейн зонине тасатма шутланă пулнă Германи.

Францин унчухнехи правителстви вăл „Страсбург нимĕç тупписем умĕнче йулни не" тӳсме пултараймасть, тесе пĕтĕм тĕнчене пĕлтерчĕ. Анчах Францин унчухнехи премйер-министăрĕ радио тăрăх каланă çак сăмахсем ефир çинчех йулчĕç, Франци делегачĕсем Лондонра Гитлер Рейн зонине туртса илнине татăклăнах йышăнма тухса кайрĕç.

Итали Абиссинине туртса илни синчен калас пулсан, 1936 çулта, Муссолини Абиссинине туртса илме хушнă вăхăтра, Лаваљ Рима кайса çӳрени мĕнле вырăн йышăнни пурне те паллă. Лаваљ хĕснипе санкцисен политикине шута илмесĕр тăни санкцисен пĕтĕм системине татa унпа пĕрле Лига нацине те хавшатма сахал мар пулăшрĕ.

Лига нацине хавшатакан тĕслĕхсене кăтартнă майĕпе, „Тан" Испанири фашисла интервенци çинчен аса илтерме манать. Вунсакăр уйăх хушши хăравçăла намăслăн „хутшăнмала мар" комедине туса пыни коллективлă хăрушăсăрлăха хавшатма сахал мар пулăшрĕ вĕт-ха. Анчах „Тан" çакса вĕлернин килĕнче кантра çинчен калаçмасăр тăма пикенет вĕт. Нумайах пулмасть Гитлерăн лейб-оргăнĕ „Фелькишер беобахтер" хаçат пурте илтмеле кăшкăрса Францин йутçĕршыв ĕçĕсен министăрне Дељбоса мухтарĕ, ăна „хутшăнмала мар политикăн ашшĕ" тесе йат пачĕ.

Агрессора уступкăсем парас тата ашкăнтарса йарас политикă Лига нацине вăйсăрлатрĕ. Вăл политикă çакăн патне илсе пычĕ: халĕ ĕнтĕ Францин кăнтăр йенчи чиккисенче Испанирен Германипе Итали фашисăмĕ хăратса тăрать. Францин хăйĕн Африкăри колонийĕсемпе çыхăнас çулĕсем йаланах хăрушлăхра. Германи Вăтаçĕр тинĕсĕн хĕвелтухăç пайĕнче çирĕпленсех пырать. Йулашкинчен, Йапонин Китайри агрессийĕ Франци тытса тăракан Индо-Китайшăн пысăк хăрушлăх туса хурать.

Çак паллă урокçенчен вывод мĕнле пулмали пуриншĕн те паллă. Хăйĕн пурнăç интересĕсене хӳтлес, хăйне Йевропăри пысăк державăсен шутĕнчех хăварас, Вăтаçĕр Йевропăри сойузникĕсене вĕсен тăшмансен аллине парас мар тесе Францин коллективлă хăрушăсăрлăх, Лига нацине çирĕплетес, миршĕн тăракан пур державăсен фронтне органиэацилес политикăна çирĕп тытса пымала.

Анчах, Франци промышленникĕсен, чукунçул хуçисемпе банкă хуçисен хаçачĕ çаксенчен йалтах урăхла вывод тăвать. Агрессорсене хирĕç тухмала-и? Нийепле те, агрессорсене хирĕç тухма йурамасть. „Тан" хаçат çырнă тăрăх, Францин фашисла агрессорсене отпор паракан йухăм пуçĕнче тăмала мар. Мира чăннипех хӳтлес, Лига нацине çирĕплетес политикă демократипе миршĕн тăракан вăйсене мобилизацилеме пултарасси—çак пулас ĕç Францин шултра промышленниксен хаçатне питĕ хытă хăратать. Хаçат тӳрех çапла çырать:

„Çакнашкал политикăна тытса пырса, Франци пĕтĕм тĕнчери халăх пысăк пулăшу парĕ тесе пире ан калаччăр. Çак майпа ĕçлеме тытăнни питĕ шиклĕ вăл пире пулăшу парассинчен ытларах, ăна туртса илме пултарать".

Франци буржуази хаçачĕ шучĕпе, Францин демократилĕ çĕршывсем миршĕн тăнине йертсе пымала мар пулсан, мира хӳтлеме халăхсен массине мобилизацилессинчен усалтан хăрана пекех хăрамала пулсан, Франци тӳпи мĕн йулать вара. Агрессор умĕнче пуç таймалисĕр пуçне урăх нимĕн те йулмасть.

Агрессор умĕнче пуçа тайма Францин обшчествин шухăшне „Тан" хаçат, чăнах та сыхланса пулин те, çапла хатĕрлет те ĕнтĕ.

„Пуç пулса тăрасси çинчен ĕмĕтленес вăхăт иртсе карĕ" тесе çырать хаçат. Урăхла каласан, Францин Йевропăри ĕçсенче йертсе пыракан çĕршывсен шутĕнчен тухмала, Йевропăра иккĕмĕш вырăнта тăракан державăсен вырăнне йышăнмала, Австрине Германи фашисăмĕ аллине памала, Чехословакине вакласа пĕтерме килĕшмеле, хăйĕн колонисемпе те çапла тумала-и тен? Агрессор умĕнче кайала чакас çулйĕре Франции шултра буржуазин хаçачĕ никам пĕлмесĕр „пĕртанлăх политики" тесе йат парать.

Çак политикă миршĕн тăракан çĕршывсен вăйне пуçтарма мар, фашисла агрессорсен блокĕ умĕнче пуç тайма, вăрçă пуçлакансене отпор пама мар, вĕсене пулăшни, мира çирĕплетни мар, вăрçа сывхартни пулать.

Лига нацирен государствă—агрессорсем тухрĕç. Унтан Германипе Итали фашисăмĕ йенче тăракансем тухма пултараççĕ. Мĕн пулать вара? Агрессорсем Йевропăра тата Инçет-Хĕвелтухăçĕнче çар блокĕсем тунă чухне, вăрçă пуçланă вăхăтра Лига наци пурне те тума пултарать тесе ĕмĕтленмели те çук. Мира сыхласа тăма тивĕçлĕ Лига наци çакăн пек ларутăру чухне пур государствăсем çине те тайанма пултараймасть. Çавăнпа та Лига нацирен агрессорсем тухнăшăн „Тан" хаçат пек „Лига наци пĕтрĕ" тесе кăшкăрмала мар, миршĕн тăракан державсем Лига наци тавра пĕтĕçнĕ фронта çирĕплетмеле.

Çакнашкал условире Лига наци çирĕплĕнме пултарать. Миршĕн тăракан державсен ĕçлеме пултаракан Лиги пулать. Çавăн пек Лига çеç миршăн тăракан, анчах Лига нацинче тăман çĕршывпа—Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсемпе пĕрле ĕçлеме пултарать. Çакăн пек Лига çеç агрессорсене тивĕçлĕ отпор пама пултарать.

Францири промышленниксемпе банкирсен хаçачĕ Лига наци „пĕтни çинчен" макăрни никама та улталаймĕ. Капиталисăмла пораженцăсем Лига нацине пĕтересшĕн. Вĕсем Францине наци тĕлĕшĕнчен чакарасшăн, Германи фашисăмĕ умĕнче пуç тайтарасшăн.

Чăваш орфографине çĕнетесси çинчен сӳтсе-йавни

Урăх чĕлхесенчен кĕнĕ сăмахсене тĕрĕс çырасси çинчен

Пур нацисен чĕлхисем те интернационаллă сăмахсемпе, вырăс тата ытти чĕлхесенчен те килнĕ сăмахсемпе пуйанланса, аталанса пыççĕ, етемлĕх историйĕ нихăçан пулман пек чечекленеççĕ. Чĕлхесем чечекленсе, йешĕрсе пыни интернационаллă чĕлхе патне çывăхарса пынине пĕлтерет те ĕнтĕ. Çавăнпа та чĕлхене аталанма кансĕрлекен чăрмавсене пĕтĕмпех пĕтерсе пымала, чĕлхе аталанăвне хирĕç пыракансемпе вирлĕн кĕрешмеле.

Ытти халăхсем пекех, чăваш чĕлхи те интернационаллă сăмахсемпе пуйанланса, аталанса пырать. Çĕнĕ сăмахсем пуринчен ытла литературăлă чĕлхи урлă сарăлса пыраççĕ пулсан, вĕсемшĕн çырулăхра нимĕнле чăрмавсем те пулмала мар. Çавăнпа та халĕхи вăхăтра чăваш правописанийĕн правилисем çинчен калаçни пит çивĕч ыйту пулса тăрать.

Çĕнĕ сăмахсем чăваш чĕлхине пуринчен ытла вырăс чĕлхи урлă килеççĕ. Çавăнпа та урăх чĕлхесенчен кĕнĕ сăмахсене çырмалли правилăсем хатĕрленĕ чухне вырăс орфографийĕпе орфоепи правилисене шута илмелле. Кун пирки Резйуков йулташ „Красная Чувашия“, „Чăваш Коммунĕ“ хаçатсенче тухса каларĕ. Вăл чăваш чĕлхине вырăс чĕлхи урлă килнĕ çĕнĕ сăмахсене вырăс правописанийĕн правилисемпе çырмала тăвасшăн. Çапла майпа вырăс чĕлхинчи буквăсем вĕçĕх чăваш алфавитне кĕреççĕ. Кун пек туни аван. Вăл урăх чĕлхесенчен килнĕ сăмахсене пăтратса çырассине пĕтерет, вырăсла калаçма, çырма пĕлекенсемшĕн пит çăмăл пулать.

Анчах та Резйуков хăйĕн шухăшне пăркаланмасăр вĕçне тухичченех илсе çитереймест, арпашса кайать. Комсомолец йышши сăмахсене пуçламăш формăра **комсомолец** çырма сĕнет, вĕçленĕ чухне урăхла: **комсомольцран, партийцпа, голландцпа.** Пирĕн шухăшпа вĕçленĕ чухне те **комсомолец, голландец, партиец** сăмахсене пăсмасăрах хăвармала, вĕсем çумне падеж аффиксĕсене кăна хушмала: **комсомолецран, партиецпа, голландцпа.** Малала Резйуков йулташ Л, Н, С сасăсене пуçламăш формăри сăмахсенче кăна вăрăмлатмала, тет. Пирĕн шухăшпа, вĕçленĕ чухне те вăрăмлатмала: **металл,** металлран, металлпа, **классран, финнпа** т. ыт. те.

Урăх чĕлхерен килнĕ сăмахсене вырăс правописанийĕн правилисемпе çырни, пĕр йенчен илсен, аван, тепĕр йенчен, йавăр.

Вырăсла калаçма, çырма пĕлмен чăваш ачисемшĕн ку пит йавăр пулать. Правилăсем хатĕрленĕ чухне пирĕн çак ачасене манса хăвармала мар.

Кунсăр пуçне тата çаксене те шута илмесĕр хăвармала мар:

1) Епĕр графикăна çырма та, вулама та çăмăллатассишĕн тăрăшатпăр. Пирĕн шутпа пĕр буквă пĕр сасăпа пĕлтермеле, пĕр сасăпа пĕр буквăпа çырмала. Щ, Ю, Я буквăсене илсен, вĕсем кашнийĕх иккĕшер сасăпа пĕлтереççĕ: ШЧ, ЙУ, Йа.

2) Чăваш чĕлхинче Е сасă пур. Епĕр ăна Е буквăпа çырса кăтартатпăр: **етем.** Çакăн пек сасă вырăс чĕлхинче те пур, анчах та ăна унта Э буквăпа çырса кăтартаççĕ. Чăваш алфавитне Э буквă кĕртсен, вара пĕр сасăна кăтартакан буквă икĕ тĕслĕ пулать.

3) Чăваш чĕлхинче С, Ç сасăсем çемçе йе хытă уçă сасăсем умĕнче тăма пултараççĕ: **симĕс, сарлака, çирĕк,** çарăк. Вырăс чĕлхинче апла мар. Çемçе уçă йе хупă сасăсем умĕнче нихăçан та С илтĕнмест, Ç илтĕнет. Вырăссем **силос, система** сăмахсене çилос, çистемă тесе вулаççĕ. Чăваш чĕлхинче **силос, система** йышши сăмахсене вырăс правописанийĕн правилисем тăрăх çырсан, вырăсла калаçма, çырма пĕлмен чăваш ачисем **çилос, çистемă** тесе вулас вырăнне вĕсене, чăваш чĕлхин фонетики саккунĕсем тăрăх, **силос, системă** (С каламасăр) тесе пăсса вулама тытăнаççĕ.

Есĕр калăр, Щ, Э т. ыт. сасăсене чăваш чĕлхине вырăс чĕлхи урлă килнĕ сăмахсенче анчах çырмала, тейĕр. Вырăсла калаçма пĕлмен чăваш ачи ку вырăс сăмахĕ, ку чăваш сăмахĕ тесе ăстан уйăрма пултартăр-ха?

Хăть вырăс, хăть нимĕç сăмахĕсем пулччăр, вĕсем пĕрре чăваш чĕлхине килсе кĕрсен, вара вырăс, нимĕç сăмахĕсем пулмаççĕ, чăваш сăмахĕсемех пулаççĕ, чăваш чĕлхин лексиконне кĕреççĕ. **Бригадир, колхоз, большевик** сăмахсене вырăсла пĕлмен чăваш ачи нихăçан та вырăс сăмаххисем тесе шутламасть, упшăн пулсан, вĕсем пурте чăваш сăмаххисем. Çĕнĕ сăмахсем чăваш чĕлхине пĕрмайах хутшăнса тăраççĕ. Ку вырăс, ку чăваш сăмахĕ, кăна капла çырмала, ăна çапла çырмала тесе уйăрма пуçласан, епĕр вара тепĕр ик-виç çултан вырăс чĕлхи урлă килнĕ çĕнĕ сăмахсене чăваш сăмаххисенчен уйăрса çитерейместпĕр. Уйăрма кирлĕ те мар, уйăрни пушшех те йавăрлатма пултарать. Çавăнпа та пирĕн шутпа чăваш чĕлхин орфографи правилисене, алфавитне **тĕпрен улăштармала.** Ку чăваш сăмаххисем, тесе уйăрмала ан пултăр.

Пуринчен ытла вырăс чĕлхи урлă килнĕ çĕнĕ сăмахсенче уçă сасăсене вырăс правописанийĕн правилисем тăрăх çырни пысăк йавăрлăхсем патне илсе çитерме пултарать.

Вырăс чĕлхинчи çакăн пек сасăсене илер-ха: а, о, э, ы, и, у. Вĕсем ударениллĕ сыпăксенче улшăнта масăрах илтĕнеççĕ. Анчах та ударениллĕ сыпăк умĕнхи йе хыçĕнчи сыпăксенче улшăнса илтĕнеççĕ, редукциленеççĕ. **Трактор,** сăмаха вырăс литературăлă чĕлхинче **трактър,** тесе вулаççĕ („ъ“ паллăна „ă“ тесе вула).

Вырăс чĕлхи урлă килнĕ çĕнĕ сăмахсенче уçă сасăсене вырăс правописанийĕн правилисем тăрăх çырмала тусан, вара вырăсла пĕлмен чăваш ачисем **трактор, Америка** сăмахсене чăваш орфографийĕн фонетикă принципĕ тăрăх **трактăр, Америкă** тесе пăсса вулама пуçлаççĕ. Вырăс сăмахĕсене пăсса вулама пуçласан, вара вăл чăваш чĕлхи урăх чĕлхерен илнĕ сăмахсемпе пуйанланассине чăрмантарма пултарать.

Çавăнпа та пирĕн шутпа чăваш чĕлхине вырăс чĕлхи урлă килнĕ çĕнĕ сăмахсене çырмалли правилăсене фонетикă принципĕ тăрăх тумала, вăл сăмахсем вырăс литературăлă чĕлхинче мĕнле илтĕнеççĕ, çавăн пек çырмала. Апла тумасан, чăваш орфографине, чăваш правописанийĕн правилисене тĕпрен улăштармала.

А. Йефимов.

СТАЛИН

(Йурă)

Халь мĕнма савăнас мар-ха пирĕн,
Телей сачĕ чечек сарнă чух?
Пурçăн йевĕр сенкер пурнăç ирĕ,
Хура пĕлĕт татки нисxта çук.
Йулташсемĕр, чăнах, çăлтăр çутă,
Унтан çутти татах пирĕн пур,
Унтан çутти пирĕн Сталин пур...

Астăватпăр, маншан: пулнă пирĕн
Пурнăç йавăр, тискер, тĕттĕм, пăчă...
Пирĕн аслă çĕршыв халĕ ирĕк,
Чи телейлĕ çĕршыв пулса тăчĕ.
Йулташсемĕр, чăнах, хĕвел ăшă,
Унтан ăшши татах пирĕн пур,
Унтан ăшши Сталин кăмăлĕ пур.

Елĕк епĕр пайтах асап курнă,
Хыçа йулнă тискер пурнăç терчĕ.—
Халь ак пирĕн чан-чан савăк пурнăç,
Пире Сталин пăхса çитĕнтерчĕ.
Йулташсемĕр, чăнах, тăван ырă,
Унтан ыррийĕ татах пирĕн пур.
Унтан ырри Сталин йулташ пур.

Халь мĕнма савăнас мар-ха пирĕн,
Телей сачĕ чечек сарнă чух?—
Пурçăн йевĕр сенкер пурнăç ирĕ,
Хура пĕлĕт татки ниçта çук.
Йулташсемĕр, чăнах, çăлтăр çутă,
Унтан çутти татах пирĕн пур,
Унтан çутти пирĕн Сталин пур.

М. Ҫаман.

А. Кăлкан

УЙРĂЛУ

Шыв хĕрринче çĕмĕрт чечек çурать
Каçма çине лăс-лăс уртăнса.
Хĕвел витĕр ăшă çăмăр çăвать
Çĕмĕрт çӳлçи тăрăх тăкăнса.

Каçма урлă каççан, çирĕклĕхре
Сар хĕр хăй савнинчен уйрăлать;
Унăн тути кулать, чĕлхи пуплет,
Икĕ хура куçĕ шывланать:

„Шурă çеçке çурса тăкăнсан та
Хура çĕмĕрт часах пиçес çук.
Тусăм, есĕ инçете кайсан та,
Манăн чунăм санран писес çук,“

„Çупкăм-çупкăм çырла пиçсе çитсен
Татса çийес килмен çын пур-ши?
Пĕрне-пĕри савса ӳссе çитсен
Уйрăлнă чух йĕмен хĕр пур-ши?“

„Ан айăпла ĕнтĕ куççуллишĕн,
Хурланса мар, савса макăрап.
Кайах тусăм, хамăр çĕнтерсессĕн
Ӳлĕм лайăх пулĕ хамăрах.“

Паттăр каччă кайать партизана—
Хулĕ урлă çакнă пăшалне:
Ленин уçса панă çĕн самана
Пулас çук хайар тăшман айне.

Сар хĕре савса чуптурĕ каччă—
Икĕ çамрăк уйрăлчĕç вара.
Унчухне таçта шăпчăк йурлатчĕ,
Пулăсем выляатчĕç çырмара.

Комсомол йышĕ ӳсет

Хуракассинчи вăтам шкул çумĕнчи (Сĕнтĕрвăрри р) комсомол организаци—пысăк организаци, унта 21 комсомолец, вĕсенчен 6 хĕр. Халĕ 4 пионер комсомола кĕчĕç, кандидатран члена 3 çын куçрĕç.

А. Йегоров.

СĔНТĔРВĂРРИ. Йалхуçалăх техникумĕнче вĕренекенсем çак вĕренӳ çулĕнче 11 студент Пĕтĕм Союзри Çамрăксен Ленинла Коммунисла Союзне кĕчĕç.

Вĕсенчен нумайăшĕ вĕренӳри ударниксем.

Г. Смирнов.

Комсомолец-пропагандиссем

Шупашкарти кооптехникум çумĕнчи комсомол комитечĕ кăçал Шаталин, Булычов тата Кудрйавцев комсомолецсене пропагандиса уйăрчĕ. Çак пропагандиссем халĕ х йсей ĕçне йуратса туса пыраççĕ. Уроксене интереслĕ иртереççĕ, лекцисем тунă чух хаçат-журнал тата илемлĕ литературă материалĕсемпе усă кураççĕ.

Хăйсен пĕлӳлĕхне вĕсем кунсерен ӳстерсе пыраççĕ. Маркс Енгельс Ленин Сталин произведенийĕсене вуласа вĕренеççĕ.

Е. Йегоров.

Çĕнĕ çула лайăх ĕçленипе кĕчĕç

Çĕрпӳри „Мартăн 8 мĕш“ промысла ертелĕн атă-пушмак тăвакан цехĕнчи рабочисем 1938 çула виççĕмĕш пйатилеткăн пĕрремĕш çулне 1937 çулхи производства планне 130 процент тултарнипе кĕчĕç. Рабочисем çĕнĕ хуçалăх çулне çĕнтерӳлĕн кĕтсе илессишĕн пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлерĕç.

Атă-пушмак тăвакансем хушшинче стахановла йухăма тата ăмăртса ĕçлессине анлăн сарса пына май, нормăна иртерсе тултаракансен йышĕ кунран-кунах ӳссе пырать. Квалификациллĕ рабочин кунне 4 мăшăр атă-пушмак йусамала пулсан, Й. Абрамов кашни кунах 6—7 мăшăр, В. Григорйев 5—6 мăшăр йусать.

Нормăна кулленех пурнăçласа пыма кирлĕ условисем туса пани пысăк вырăн йышăнса тăрать. Рабочисене кану вăхăтне лайăх ирттерме вĕсене валли çителĕклĕ таран хаçат-журналсем çыранса панă, кашни кунах хаçат-журналсем вулаççĕ. Радио та пур, радио тăрăх паракан хыпарсене рабочисем ушкăнпа итлеççĕ.

Рабочисен техникла пĕлӳне ӳстерме техминимум кружокĕсем организациленĕ. Унта цехри рабочисене пурне те йавăçтарнă. Кружока Михайлов йулташ йертсе пырать, рабочисем занятисене йĕркелĕн çӳреççĕ, тăрăшса вĕренеççĕ.

Рабочисен ĕçлес, вĕренес хаваслăх питех те пысăк. Вĕсем пуш вăхăтра илемлĕ литературăсем те вуласшăн. Анчах цехра илемлĕ литературă питĕ сахал.

П. Иванов.

Ӳсĕм çулĕ çинче

Кăçал Чăваш Государствă Академи театрĕнче чăваш труппин аслă режиссĕрĕ пулса Иванов К. И. ĕçлет. Вăл çамрăк режиссĕр. Анчах, Мускаври аслă шкулта вĕренсе çапла режиссĕрсем хушшинче çитĕннĕскер, вăл виçĕ уйăх ĕçлесех хăйĕн талантне, çӳлĕ культурине кăтартма ĕлкĕрчĕ.

Иванов ĕçлеме тытăннăранпа чăваш труппи тарăн идейăлă, художествăлă йенчен лайăх спектакльсем лартма пуçларĕ. Театрта асран каймин образсем çуралчĕç. Етемлĕхе ирĕке кăларасшăн пуçне хĕрхенмесĕр паттăрăн кĕрешекен Павкă Корчагин (арт. Алексейев), Павкăна кĕрешӳ çулĕ çине тăма пулăшакан Жухрай большевик (арт. Ургалкин), Павкăн малтанхи йуратувĕ—Тоньă Туманова—(арт. Иванова), Панкратов (арт. Семенов) т. ыт. те манма çук образсем пулса йулаççĕ.

Çак образсем пурте Н. Островскин „Хурçă йепле хĕрнĕ“ романĕ тăрăх тунă пйесăра. Ку спектакль пысăк усăллă, массăна коммунисла воспитани паракан спектакль пулса тăчĕ.

Иртнĕ 1937 çулта декабĕрĕн йулашки кунĕсенче чăваш труппи выр[illegible] иртнĕ ĕмĕрти çапла драматургĕ А. Островский çырнă „Бедность не порок“ йатлă пйесăна лартса тата тепĕр çитĕнӳ турĕ.

Островский вăхăтĕнчи пусмăрлă пурнăçа тĕрĕс те тарăн шухăшлă туса, сăнласа пама пĕлни, пйесă тăрăх лайăх образсем тума пултарни—режиссĕр Иванов автор идейине тĕрĕс ăнланса илни, вăл ăна куракансем патне пайанхи куçпа пăхса çитерме пĕлнине кăтартаççĕ. Иванов хăйĕн ĕçне йуратать, акторсен коллективĕпе тăрăшса, пикенсе ĕçлет. Çавăнпа ун постановкисем лайăх пулаççĕ.

„Бедность не порок“—пйесăна лартнă чух тата та çĕнĕ образсем çуралчĕç. Вĕсем:—Любим Торцов (арт. Ургалкин), Гордей Торцов (арт. Семенов), Коршунов (арт. Медиков). Трофимов артис Мита рольне, ун пек пысăк рольсене халиччен выляман пулин те, лайăх каларчĕ. Курма пыракансен йаланхи йуратнă акторĕ Алексейев Разлюлайев рольне аван выляса пачĕ. Çавăн пекех хăйсен ролĕсене Ырзем, Петрова, Семенова артисткăсем тата арт. Фадейев лайăх выльарĕç. Аннă Ивановнăна выльакан артискă Тимофейева хăйĕн рольне начартарах каларчĕ, малашнехи спектакльсенче çакна асăрхас пулать унăн.

Пĕтĕмĕшпе илсен, спектакльре акторсем тикĕс выльарĕç. Вĕсен культури, маçтăрлăхĕ ӳссех пыни лайăх паларчĕ.

Темиçе çул хушши сăтăрласа пурăннă халăх тăшманĕсенчен тасалнă хыççăн, Чăваш Государствă Академи театрĕ уççăн сывласа йачĕ. Вăл йĕркелĕрех, кăмăллăрах пулса тăчĕ. Унта халь ĕлĕкхи пек кичемлĕх çук. Артиссем хушшинче ик-виç пайа уйăрăлса кĕтессем тăрăх пăшăлтатасси, чĕрне вĕççĕн çӳресси пĕтрĕ. Вĕсем хастарланса пĕтĕм чунтан ĕçлеме, хĕрсе вĕренме тытăнчĕç. Театр хавассăн, тулли пурнăçпа пурăнма пуçларĕ. Вăл пысăк ӳсĕм çулĕ çине тăчĕ.

А. К.

Вăхăтлă сĕнӳ

Н. Резйуков йулташ статйи („Чăваш Коммунĕ“ хаçатра декабĕрĕн 24-мĕшĕнче тухнă)—кирлĕ, вăхăтлă статйа.

Çапах та, Н. Резйуков пройекчĕн пур принципĕсемпе те килĕшме май çук, ку пройектра иккĕленӳлĕ тĕлсем нумай.

Анчах, йепле пулсан та, çак ик-виç принципа асра тытни усăллă пулĕччĕ:

1. Интернационаллă сăмахсене—большевик, комбайн, метр, колхоз, прогресс, культиватор, т. ыт те, вырăс сăмахĕсене Вася, тетрадь, Тула, рынок, вожатый т. ыт. те çаплипех çырмала.

2. Халĕ икĕ тĕрлĕ çыракан сăмахсене чăваш чĕлхи историйĕ йенчен, тĕрлĕ çĕрте тĕрлĕ калаçнине шута илме кирлĕ. Мĕншĕн „çырăва „çырăвăн“, „кĕрĕвĕн“, „кĕрĕве“,—тесе çырмала? Мĕншĕн çыру-çырува“, „çырувăн“, „кĕрӳ-кĕрӳвĕн“, „кĕрӳве“ мар?

3. Пур саспаллисене те пăхса тухмала. „Ă“ „Ĕ“ саспаллисене улăштарма май шырамала. „ь“ чăваш чĕлхине кӳртсен, хурелĕ саспалисем пĕтеççĕ. Вара „ь“ саспаллин хăшпĕр чăвашла сăмахсенче те (халь-халь) çырма тӳрĕ килет.

„Власть“ сăмахăн малтанхи форми çаплах йулать, анчах вĕçне „влаçăн“ „влаçпа“ „влаçран“, „влаççем“ тесе çырмала. Калаçнă чухне те çаплах калаççĕ вăл сăмаха.

Кун пек ыйтусем сахал мар, вĕсем нумай сиксе тухаççĕ.

Ку—йăслăлахпа тĕпчев институчĕн ĕçĕ кăна мар, вăл—пĕтĕм ĕçхалăхĕн ĕçĕ, пур халăх çак орфографи ыйтуне сӳтсе-йавнă çĕре хутшăнма тивĕçлĕ.

И. Давыдов.

Н. А. Некрасов

Кама лайăх пурăнма Руç çĕрĕнче

ПРОЛОГ

Хăш çултине—шутла ĕнтĕ,
Хăш çĕр çинче—чухла ĕнтĕ,
Ман çул çинче пуçтарăнчĕç
Çичĕ мужик пĕрле:
Самантлăх „ирĕк“ тупнисем,
Туртсахĕсев кĕпĕрнинчен
Хуйăхтӳсев уйесĕнчен,
Пушлахăвăл вулăсĕнчен,
Пур тĕрлĕ йалсенчен—
Саплăк Касси те Шатăклăх,
Çара-Касси Чĕтре-Касси,
Çунăк-Касси, Çимен-Касси,
Тырпулманйел те пур,
Пуçтарĕнчĕç те тытăнчĕç
Хĕрӳлĕн тавлашма вĕсем:
Руç çĕрĕнче кам пурнăçĕ
Хаваслă та тулли?

Роман калать: помешчикĕн,
Демйан калать: чиновникĕн,
Лука калать: пупăн.
Шыçмак купца мăн хырăмăн!
Калаç Губин тăванĕсем
Иванпа Митродор.
Пахом старик кăшт пусăрнчĕ,
Çĕре пăхса каларĕ вăл:
Çӳлте ларан улпутăн шет,
Шет государ министăрĕн.
А Пров калать: патшан...

Мужик вăл çирĕп, вăкăр пек,
Унăн пуçне мĕн кĕчĕ-и,
Ăна утан чукмарпала
Çапса та кăлараймăн çав;
Кашни хăйшĕн тăрать.
Ха, тавлашу пуçарчĕçĕ,
Иртен-çӳрен шутлать ĕнтĕ—
Вĕсем пĕр-пĕр мул тупнă та
Пайлаççĕ пуль тесе...
Анчах кашни хăй ĕçĕпе
Кантăрлаччен çеç тухнă-мĕн:
Пĕри çул тытнă тимĕрçе,
Тепри йалти йалапала
Ачи йатне хурас тесе,
Прокофи аттене чĕнме
Утнă Иванькăва,
Пахом пыллă карассемпе
Уттарнă Аслă пасара,
А Губинсем-тĕк иккĕш те,
Ыгахальтен йĕвен илсе,
Хăйсен харсăр утне тытма
Уттарнă кĕтĕве.
Кашни тахçан хăй çулĕпе
Киле таврăнмала ĕнтĕ—
Анчах вĕсем шав малала
Утаççĕ ĕретпе.
Выç кашкăрсенчен тарнă пек,
Васканă çемĕн ăнăçлăн
Утаççĕ васкаса.
Пыраççĕ—хирĕçеççĕ шав!
Кăшкăрашаççĕ ăссăрăн!
Вăхăт кĕтсе тăмасть.

Тавлашнă май сисмерĕç те,
Хĕвел анса çухалчĕ те
Каç пулчĕ куçкĕрет.
Кунта çулпа тĕлпулнă пĕр
Йăх-йах арам Дурандихă
Халь вĕсене: „тăванăмсем,
Тĕксĕм каçа куратăркач,
Ăçта кайма шут турăр-ха?“
Тесе пĕр кăшкăрман пулсан,
Вĕсем танкканă пулĕччĕç
Хăйсем пĕлмесĕр тĕлсĕррĕн
Çапла ак çĕрхутах.

Ыйтайрĕ, кулса йачĕ леш,
Асамçă, утне çапрĕ те
Вĕçтерчĕ малала...

Ăçта?.. Кăнь канĕн пăхрĕçĕ
Кунта хăй мужиксем,
Тăраççĕ шăппăн, чĕмсĕррĕн...
Каç пулнă тахçанах,
Хисепсĕр йăвă çутăлнă
Çӳлти сут çăлтăрсем.
Шуса хăпарчĕ уйăх та,
Чăрсăр-хастар çӳревçĕсем
Мăн çулĕ урлă ӳкрĕçĕ
Сĕм-тĕксĕм мĕлкесем.

Ой, тĕксĕм, тĕксĕм мĕлкесем!
Кама хуса çитместĕр-ши?
Камран иртсе каймастăр-ши?
Анчах сире çеç, мĕлкесем,
Хуса çитсе тытма та
Ыталама та çук.

Вăрман çине, мăн çул çине
Пăхать, чĕнмест Пахом,
Пăхать темле вăл шухăшлăн,
Унтан çапла калать:
—„Ну! арçури, пит селĕм çеç
Кăтартрĕ мыскара!
Шетех ак епĕр килтĕмĕр
Пĕр вăтăр çухрăмах.
Калла каймашкăн—ывăннă,
Кайсан та çитес çук,
Мĕскер хаљ тăвăн,—ларăпăр,
Чипер, çын йевĕр канăпăр
Ирхи çут хĕвелччен!..“

Çапла леш арçури çине
Пур инкеке тӳнтерчĕç те,
Çул хĕрринчи вăрман айне
Вырнаçрĕç мужиксем.
Кавайт чĕртрĕç, майлашрĕçĕ,
Иккĕн чупрĕç ерех патне,
А ыттисем васка-васка
Таса хурăн хуппи сӳсе
Майларĕç куркасем.
Ерех килсе те çитрĕ ак,
Закускăсем те тупăнчĕç—
Ĕçеççĕ мужиксем!
Виçшер-и алтăр ĕçрĕçĕ,
Апат та çырткаларĕçĕ,
Татах пуçларĕç, тытăнчĕç
Хĕрӳллĕн тавлашма вĕсем:
Руç çĕрĕнче кам пурнăçĕ
Хаваслă та тулли?
Роман сухрать: помешчикĕн,
Демйан сухрать: чиновникĕн,
Лука сухрать: пупăн!
Шыçмак купца мăн хырăмăн!
Çухрас Губин тăванĕсем,
Иванпа Митродор;
Пахом сухрать: мăн тивĕçлĕ
Çӳлте ларан улпутăн, тет,
Хăй государ министăрĕн,
А Пров сухрать: патшан!

Малтанхи пек мар харсăррăн
Хускалчĕç, хĕрсе карĕçĕ
Хĕрӳлĕ мужиксем.
Вăрçмалипех вăрçаççĕ вĕт,
Пĕр пĕрине кĕçех акă
Пуçлаççĕ çӳçлешме...

Ак-ак, сыхласша ӳкрĕçĕ!
Роман силлет Пахомкăна,
Демйан ав—Лукана.
А Губинсем ав иккĕшĕ
Кĕрнек Прова хашка-хашка
Хĕртеççĕ, ӳтуклаççĕ—
Кашни хăй май çухрать.

Вăранчĕ сасă сулăмлăн,
Касхи çĕр тăрăх вăркăнчĕ,
Йанăраса çӳре-çӳре,
Çухăрашса çӳре-çӳре,
Мужиксене вăл хĕтĕртнĕн
Кĕрлет вăрман çинче.
Патшан! йанрать ак сылтăмран,
Сулахайран ав илтĕнет:
Пупăн! Пупăн! Пупăн!
Ак пĕтĕм вĕсен-кайăклă,
Пур чупкăн тискер-кайăклă,
Çĕлен-калталă-шĕкĕлĕ
Вăрман тĕпрен хускалчĕ вĕт,
Ӳлет те мĕкĕрет!

Кăвак куйан, хăравçăскер,
Хускалчĕ пуринчен малтан,
Пĕр тĕмерен, вут хыпнă пек,
Сасартăк сиксе тухрĕ те
Çиçтерчĕ малала!
Ун хыççăн чанасем хайхи
Шур хурăн тăррисем çинче
Пуçларĕç ирсĕр шав.
Кунта тата хăранипе
Йăваш шĕкĕлчи—кайăкăн
Чĕппийĕ тухса вăркăнчĕ
Çемçе ăш йăваран;
Чĕнет, йĕрет вĕт амăшĕ,
Ăçта ес чĕппĕм—чĕпĕçĕм!—
Шырать те тупаймасть.
Унтан вăтă куккукĕ те
Вăранчĕ, ак такамшăн вăл
Шут тытрĕ авăтма;
Пĕр вунă хут та тытăнчĕ
Анчах ĕнереймерĕ вăл
Нистан та йурррине...
Авăт, авăт, куккукăмăр!
Тыр пучаха ларсан,
Ес пучахпа чыхнатăн та—
Авăтаймастăн тек! *)
Ак вĕççе килчĕç сулăмлăн
Çич тăмана—çич вăрă пек,
Çич йăвăç тăррине вĕсем
Çапăçнине сăнаç.
Ахрăç çурçĕр кайăкĕсем!
Вĕсен сап-сара куçĕсем
Паха шăратнă ăвăслă
Çуртасем пек çунаççĕ—
Вунтвата сар çурта!
Çахан та килсе ĕлкĕрчĕ,
Вут патĕнчи йуман çине
Вăл ларчĕ, ăсласкер.
Ларать вăл выçă кăмăллăн,
Çапăçура хăшне-пĕрне
Çапса ӳкерĕçин тесе,
Шуйттаншăн кĕлтăвать.
Шăнкравлă шухă ĕне те ак,
Каçпа кĕтӳрен тарнăскер,
Çын сассисене илтрĕ те
Пычĕ кăвайт патне,—
Кунта питех те тĕлĕнчĕ,
Куçĕсемпе вăл тăрăнчĕ
Хăй мужиксем çине.
Хайар, вĕри сăмахсене
Чылай итлесе тăчĕ вăл,
Унтан мăн саслăн вĕçĕмсĕр
Пуçларĕ мĕкĕрме.

Мĕкрет вăл ăсран кайнă пек,
Çуйхать чанасен ушкăнĕ,
Шавлаç йĕкĕтсем аскăнăн,
Çĕр тăрăх кайан сасă
Йантрать вăрман çинче,
Çав сассăн пур пĕр ĕç кăна:
Тӳр çынсене витлес те ун
Ачапчапа хĕрарăма
Сăлтавсăр хăратас.
Хăйне ăна чикам курман,
Илтме кашни çын илтнĕ пуль,
Ӳтсĕр—çапах пурнать вăл хăй,
Чĕлхесĕр—кăшкăрать.

Шур тăмана мăн кăмăллă,
Мускав майри княгинйă пек,
Мăкăртатать кунтах,
Çунаттипе çĕре çапса,
Йе йăвăç тĕмине тивсе,
Вĕççе илет вăл хăй тĕллĕн,
Хресченсенчен кулать.

Чейе хăлхалă тилĕ те
Хĕрарăмла шухăшĕпе:
Мĕн пулнине пĕлес тесе,
Мужиксем патне вăрттăнăн
Çывхарчĕ йăпшăнса.
Иглерĕ-итлерĕ вăл,
Унтан чĕр-шăппăн пăрăнчĕ:
„Шуйттан та ăнланаймĕ çав!“
Тесе шухăшласа.
Чăнах, тавлашакансем те
Хăйсем чухланă-пĕлнĕ-ши
Мĕншĕн шăвланине...

Айак пĕрчи шăммисене
Пĕр-пĕринне çителĕклĕн
Суса тухсан тин таврăнчĕ
Ăстанĕ хресченсен.
Пĕр лакăмран шыв ĕçрĕçĕ,
Çăвăнкаларĕç, усăлчĕç,
Унтан пуса пуçларĕ ак
Ыр ыйăх вĕсене.

Çак самантра пĕр пĕчĕкçĕ
Кайăк чĕппи хуллен-хуллен,
Çур чалăшăн вĕçе-вĕçе
Çитрĕ кăвайт патне.
Пахом ăна тӳрех тытрĕ,
Вут çутине илсе пырса
Çăвăркаласа пăхрĕ те
Каларĕ: „Кайăк пĕчĕкçĕ,
Анчах чĕрни вастра!
Вĕрсен—ывçăран вăркăнăн,
Кăвар çине те тăрăнăн,
Тĕртсен вилсе те кайăн ес,
Анчах çапах та, кăйăкăм,
Ес вăйлă мужикрен.
Çунаттусем ак çитĕнĕç,
Йей-йей! пĕчĕкçĕ кайăкăм,
Ăçта çитме шутларăн ес,
Çитетĕн туххăмрах!
Ой, есĕ пĕчĕк кайăкăм!
Çунаттусене пар пире,
Епĕр вĕççе çавăрнăпăр
Пĕтĕм патшалăха.
Веç курăпăр та тĕпчĕпĕр,
Веç ыйтăпăр та пĕлĕпĕр:
Руç çĕрĕнче кам пурнăçĕ
Хаваслă та тулли?“

(Йулашки пулать).

Арк. Ĕçхĕл куçарнă.

*(Тырă пучаха ларсан, куккук авăтма пăрахать („пучахпа чыхăнать“,—теççĕ халăхра) НЕКРАСОВ АСĂРХАТТАРНИ

Китайăн Расна районĕсенче

„Корреспонданс ентернасионаљ" йатлă журнал Китай республикин Расна районĕсенчи пурнăç çинчен çырат. Вĕсем халиччен совет районĕсем пулнă. Журнал Расна районсенчи ĕççыннисен пурнăçĕ лайăхланнине тата вĕсен куљтури ӳссе пынине палăртат.

Çурçĕр-Хĕвеланăçри Расна район, тет журнал, Китайăн чи чухăн, чи кайа йулнă районĕсенчен пĕри пулнă. Унти халăха помешчиксем тата милитариссем йĕркесĕр хытă експлоатацилесе пурăннă. Пĕр-пĕрин хушшинчи вăрçă, тырпул пулман çулсем тата сикекен тĕрлĕ чирчĕрсем çынсене çавапа çулнă пек çулнă.

Районăн çĕршыв пуйанлăхĕсем темĕн пекех пысăк. Тухăçлă çĕрсем тата кĕтӳ çӳретмели вырăнсем тинĕс пек сарăлса выртаççĕ. Çĕр айĕнче тĕрлĕрен пуйанлăхсем—нефт, тăвар, тимĕр-тăмăр руди, çĕркăмрĕк сахал мар. Анчах помешчиксемпе милитариссем пуçпулса пурăннă чухне çĕршыв пуйанлăхĕсем вĕсен аллинче пулнă.

Совет влаçĕ организациленсен çав районсенчен помешчиксене тата милитариссене хăваласа кăларса йанă. Вĕсен çĕрне хресченсене валеçсе панă. Кашни хресчен 12 муран пуçласа 18 муна çити çĕр илнĕ (1 му—$^{1}/_{16}$ га). Темиçе вуншар тĕслĕ налогсем вырăнне пĕр прогрессилĕ валог кăна пухмала тунă. Районра потребителлĕ кооперативсем, çавăн пекех тата производствăллă кооперативсем организациленĕ. Вĕсем хресченсене йалхуçалăх орудийĕсем, вăрлăхсем, ĕç выљăхĕсем туйантарас йеппе ĕçлеççĕ. Районăн çĕрĕç органĕсем туса иртернĕ ĕççене пула 1937 çулта район вăйла тырпул туса илнĕ.

Помешчиксемпе милитариссен пусмăрĕнчен хăтăлнă халăхăн пурнăçĕ лайăхлансах пырат. Çĕнĕ çĕр участкисене ĕçлеме тытăннă май акакан çĕр лаптăкĕ аслăланса пырат. Пĕр Фуши районĕнче кăна акакан çĕр лаптăкĕ 10.000 му ӳснĕ.

Халăхăн куљтури те ӳсет. Нумай ах та пулмаст çав районри халăх 90 проц. хутла пĕлмен. Халĕ çитĕннисем 30 проц., ачасем 70 проц. таран хутла пĕлеççĕ. Пур çĕрте те çитĕннисене валљи каçхи курссем организациленĕ. Кашни вулăсрах ултă çул вĕренмели шкул организациленĕ. Курссенче тата шкулсенче тӳлевсĕр вĕрентеççĕ. Вĕренесси обйазатељнă мар пулин те, вĕренме питĕ хавассăн çӳреççĕ. Хĕрарăмсем уйрăмăнах хастаррăн вĕренеççĕ.

Кашни йалтах куљтурă комиççийĕ тунă. Вăл саспа вуламалли кружоксем, спорт, хор, ташă кружокĕсем организацилет, çавăн пекех санитари грамотине сарас тĕлĕшпе ĕçлет.

Расна районсенче хĕрарăмсене пĕтĕмпех ирĕке кăларнă. Вĕсем производствăра ĕçлеççĕ, шкулта вĕренеççĕ, çарта тăраççĕ. Нумай пулмаст выранти самоуправлени органĕсен суйлавĕсем пулса иртнĕ. Çав органсене 30 проц. йахăн хĕрарăмсене суйланă. Çемйери пурнăç та улшăннă; арлă-арăмлă пуласшне обйазатељнă гражданла регистрацилемеле тунă, çавна май нумай арăмпа пурнасси пĕтнĕ.

Китайăн Расна районĕсенчи ĕççыннисем çĕнĕ пурнăç тăваççĕ, тесе çырат журнал. Вĕсем Китай никама пăхăнман, ирĕклĕ тата телейлĕ çĕршыв пулассине пĕлтерсе тăраканнисем пулаççĕ.

Патăрйелĕнчи çар вĕренӳвĕн пунктĕнче винтовка çинчен вĕренеççĕ.

Цыганов фото-ӳкерчĕкĕ.

Вăрă-хурахсене тивĕçлипе айăпларĕç

Йетĕрне районĕнчи Орба Павлово йалĕнчи Обрйушкин Федорпа Соколов Тимофей иккĕшĕ темиçе хут та колхоз тата колхозниксен пурлăхĕсене вăрланăшăн судпа айăпланнискерсем, халĕ те вĕсем колхозпа колхозниксен пурлăхĕсене çаратса пурăннă.

1937 ç. мартăн 20-мĕшĕнче Йефремов колхозникĕнне амбар уçине çĕмĕрсе 628 тенкĕлĕх тĕрлĕрен йапаласем çаратнă. Апрелĕн 5-мĕшĕнче пĕр каç хушшинчех Шчеголевпа Назаровăн шур йапалисемпе ытти тумтирсене вăрланă.

Çак вăрă-хурахсен ĕçне Йетĕрне районĕнчи халăх сучĕ хăйĕн ларăвĕнче пăхса тухса Обрйушкина виçĕ çуллăха тĕрмене хупмала, тĕрмерен тухсан виçĕ çул хушши сасă прависĕр хăвармала, Соколова икĕ çула тĕрмене хупмала тата виçĕ çуллăха сасă прависĕр хăвармала приговор йышăнчĕ.

М. Йемелйанов.

Гога Румыни правителствин тулашри политики çинчен

Румыни столицинчен—Бухарест хулинчен пĕлтернĕ тăрăх, Румынири çĕнĕ правителствă пуçлăхĕ Гога „Инвинг стандарт" йатлă Англи хаçачĕн представителне çакна паллă туса каласа панă: епĕ кĕске срукрах Германипе тата Италипе таччăн пĕрлешессине шанатăп, тенĕ. Румыни правителстви çĕнĕ сутуилӳ договорĕ тăвас пирки Германипе хаљтерех калаçма пуçлас тесе тăрăшат, тесе кăтартнă Гога.

* * *

Румынири демократилĕ общественнăçăн йышлă сийĕсем Гога правителстви çине питĕ тăшманла пăхаççĕ, ăна уççăнах фашисла диктатурă правителстви, çĕршыв ăшĕнче унăн нимĕнле тĕрек те çук тата пĕр Германи пулăшăвĕ çине çеç тайанса тăрат, тесе хаклаççĕ.

„Репортер" йатлă Румыни хаçачĕ правителствăна çивĕччĕн критиклет. Германипе таччăн пĕрлешме тăрăшни вăл Румыни хăй никама та пăхăнас марине çухатнине тата вăл фашисла агрессорсен пайĕ пулса кайассине пĕлтерет, тесе кăтартса парат хаçат.

Румынин,—тесе çырат хаçат,—миршăн тăрăшакан çĕршывсен ушкăнне пĕрлешмеле, вĕсем хушшинче Совет Сойузĕ паллă вырăн йышăнса тăрат. (ТАСС).

ЙУТÇĔРШЫВСЕНЧЕ

ЊЙУ-ЙОРК, йанварĕн 1-мĕш. Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенчи ĕç министерствин сведенийĕсем тăрăх, 1937 çулăн малтанхи вунă уйăхĕ хушшинче çĕршывра 4 пин ытла забастовкă пулнă. Вăл забастовкăсенче 1.768 000 рабочи хутшăннă. 1937 çулта пулнă пĕтĕм забастовкăсенчен 56 проценчĕ коллективлă договорсем тума тата профсойузсене йышăнма ыйтса пулнă.

БАРСЕЛОНА, декабĕрĕн 31-мĕш. Йанварĕн 2-мĕшĕнче Валенсире Пĕтĕм Испанири Пĕтĕмĕшлĕ Рабочи Сойузĕн пленумĕ пухăнат. Вăл пленумра Ларго Кабалйеро пуçпулса тăракан Пĕтĕмĕшлĕ Рабочи Сойузĕн кивĕ ĕçтăвкомĕн ĕçĕпе пулнă раскол ыйтуне сӳтсе-йаваççĕ. Ку пленум Пĕтĕмĕшлĕ Рабочи Сойузĕн профсойузне пĕрлешнĕ Испани ĕççыннисен пĕрлĕхне тăвассинче тĕпрен улăштаракан тапхăр пулмала.

БАРСЕЛОНА, декабĕрĕн 31-мĕш. „Френте рохо" хаçат кăтартса панă тăрăх, Валенсири муниципалитетран ПОУМ-ăн контрреволюцилĕ-троцкисла организаци членĕсене кăларсан чăн-чăн пĕрлĕх пулма пултарат тата чăн-чăн тивĕçлĕ ĕç пуçланат. ПОУМ-ăн контрреволюцилĕ троцкисла организаци членĕсене малтанах кăларнă пулсан муниципалитет ĕçĕнче чăрмавсем пулман пулĕччĕç, троцкисла бандитсем унта пĕрмайах сăтăрланă, тесе кăтартат хаçат.

ЛОНДОН, йанварĕн 2 мĕш. Рейтер агенстви пĕлтернĕ тăрăх, Ганстингсри шахмăт турнирĕн пиллĕккĕмĕш тӳрĕнче: Ржешевский Джордж Томасран, Александер А. Томасран, Микенас Ферхерстран выљаса илнĕ. Кереспа Файн выљанă парти 29-мĕш ходра никам çĕнтерейменнипе пĕтнĕ. Тейлорпа Флор выљакан партийе тепĕр вăхăта куçарнă.

ПАРИЖ, йанварĕн 2-мĕш. Еспањ агенстви пĕлтернĕ тăрăх, хĕвелтухăçри фронтăн Теруел участкине васкасах 5 пин Марокко салтакĕсене йăраççĕ.

ПРАГА, декабĕрĕн 31-мĕш. „Дейче фољксцейтунг" хаçат пĕлтернĕ тăрăх, гитлеровецсем фашисла саламланипе ответлеменшĕн Ерфурт хулинче пĕр предприйатире 17 рабочийе ĕçрен кăларса йанă. Дортмундра рейхсверăн икĕ салтакĕ каласса тăнă, пĕр салтакĕ: „Германи питĕ хытă хĕспăшалланат", тесен тепри: „тăхта, вăл часах саланса кайнине есĕ курăн. Пулас вăрçăра епĕ хутшăнмастăп, хамăн пăшала офицерсене хирĕç çавăратăп", тесе ответленĕ. Çакăншăн ăна ултă уйăх хушши тĕрмере хупса усрамала тунă.

БАРСЕЛОНА, йанварĕн 2-мĕш Республикалă Испанин куљтурă милицийĕ çара илнĕ вуншĕр пин çынна хутла вĕрентнĕ, 33 çĕнĕ библиотекă тата 23 „салтак кĕтесĕ" тунă. Куљтурă милицийĕн представителĕсем 750 лекци вуланă тата 78 стена хаçачĕ кăларнă.

ЛОНДОН, йанварĕн 2-мĕш. „Дейли гераљд" хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Мелилйана Ливирен 8 пин арабсемпе негрсем пынă. Пăлхавçăсем вĕсене „марокканецсем" тесе калаççĕ.

ЛОНДОН, йанварĕн 2-мĕш. Йегипет королĕ парламент ĕçне пĕр уйăх хушши чарса лартасси çинчен кăтарту кăларнă.

ПАРИЖ, йанварĕн 1-мĕш. Парижри çимĕç магазинĕсемпе базарсĕнче ĕçлекенсен, „Гудрич" предприйатисенчи рабочисен тата грузлă транспортăн шоферĕсем пуçласа йанă забастовкă халĕ те пырат. Предприйати хуçисен рабочисене хирĕç тăвакан пĕрлĕх фрончĕ саланса кайат. Вакă тата вăтам предприйатисен хуçисем 1936 çулхи условипе коллективлă договорсене çĕнĕрен тума килĕшеççĕ, рабочисем ĕçукçине хушма тата забастовкă тăвакансене хирĕç репресçи тума парахма ыйтнине йышăнаççĕ. Уйрăмăн илсен, хаçат хучĕ турттаракан транспорт хуçисем рабочисен çĕнӳвĕсене йышăнма килĕшнĕ. Хаçатсем валљи хут турттаракан автомашинăсем ĕçлеме пуçланă.

Совет Сойузĕ тăрăх

ЛЕНИНГРАД, йанварĕн 2-мĕш. (ТАСС). „Краснознаменец" заводри слесăр-стахановец Пашков йулташ, вырубочнăй станок çине хăй шухăшласа кăларнă меслете майлаштарса лартса, декабĕрĕн 31-мĕшĕнче калама çук чаплă пысăк ĕçтухăçлăхĕ тунă. Пилĕк сехет те 35 минут ĕçлесе вăл 168 нормă тултарнă. Çав кун Пашков йулташ 1. 182 тенкĕ ĕçлесе илнĕ.

Ĕç хыççăн пулса иртнĕ митингра завод директорĕ Пашков йулташа вăл кун ĕçлесе илнĕ ĕçукçине тӳленĕ.

СВЕРДЛОВСК, йанварĕн 1-мĕш Кировград районĕнчи малта пыракан предприйатисен коллективĕ çулталăкри плана ытлашшипех тултарнă. „Середовина" ыттăн рудникĕ çулталăкри плана 165,5 процент тултарнă. Ичетскипе Айатски рудникĕсем заданирен иртерсе тултарнă.

ЙОШКАР-ОЛА, йанварĕн 2-мĕш. Мари республикĕнчи колхозсенче пысăк строителствă пырат. Иртнĕ çулта вунă уйăх хушшинче кăна 1.802 çĕнĕ çурт, вăл шутран 116 тырă усрамали склад, 95 вите, 77 йĕтĕн типĕтмели, 27 сысна вити тата 25 выљăх карташĕ тунă. Вĕсемсĕр пуçне тата мунчасем, клубсем, гаражсем, кирпĕч завочĕсем, шыв тата çил арманĕсем нумай тунă.

ВОРОНЕЖ, йанварĕн 2-мĕш Йанварĕн пĕрремĕшĕнче облаçра тăлкишĕпех выљăх-чĕрлĕхсене шута илсе тухма пуçланă.

Выљăх-чĕрлĕхе шута илес ĕçре 4 пин ытла счетчик тата 20 пине йахăн активис ĕçлеççĕ. Буденновски районра кашни счетчик пĕр кун хушшинче 60 хуçалăхри выљăхсене шута илес вырăнне, 70—80 килре çырса тухат.

ЕРЕВАЊ, йанварĕн 2-мĕш. Арменире пур çĕрте те выљăх-чĕрлĕхсене шута илме пуçланă. Пырса кĕме йăвăр, çӳлĕ сăртлă районра колхозниксемпе йединоличниксен выљăх чĕрлĕхĕсене шута илессине срукченех пуçласа пĕтернĕ.

Парти организацисенче

МИНСК, йанварĕн 2-мĕш. Парти документчĕсене тĕрĕсленĕ тата улăштарнă чухне „пассивлă пулнăшăн" тесе Минск хула парти организацинче 280 çынна, Гомељри организацинче—160 çынна, Витебскри организацинче—37 çынна партирен кăларнă т. ыт. те.

Çак кунсенче БК(б) Партин Минск хула комитечĕ „пассивлă пулнăшăн" тесе партирен кăларнă 11 çыннăн зайавленине пăхса тухнă. Вĕсенчен 8 çынна партирех хăварнă, пĕрине сочувствуйушчине куçарнă.

„Пассивлă пулнăшăн" партирен кăларнисем хушшинче чунтан-чĕререн тăрăшса активлă ĕçлекен парти членĕсем пулнă. Партирех хăварнă Йелисейев йулташ, Мйаçников йачĕпе тăракан вагонсем йусакан завод рабочийĕ, 1932 çултанпа парти членĕнче тăрат, активлă общественник. Пĕр вăхăтра Йелисейев йулташ чирлĕ пулнă пирки парти шкулне çӳреймен. Ăна „пассив" шутне кĕртсе партирен кăларнă.

Партин Минск хула комитечĕ „пассивлă пулнăшăн" кăларнисен ĕçĕсене пăхса тухассине тата тунă йăнăшсене тӳрлетессине питĕ кайа йулса пурнăçа кĕртет, Белорус республикĕнчи парти ытти организацисенче вăл ĕç халĕ те пуçланман-ха. (ТАСС).

Чехословаки хаçачĕсем Совет Сойузĕ çинчен

ПРАГА, йанварĕн 2-мĕш. Прага хаçачĕсем хăйсен çĕнĕ çул статйисенче ССР Сойузĕ пĕтĕм тĕнчере мĕнле вырăн йышăнса тăни çинчен пысăк пимлĕхпе çырса, Совет Сойузĕн пĕтĕм тĕнчере йышăнса тăракан вырăнĕ уйрăмăнах ССР Сойузĕн Аслă Совет суйлавăн резуљтачĕсем майпе ӳснине, паллă тăваççĕ.

„Руде право" хаçат „ССР Сойузĕ, лăпкă çаманапа ирĕклĕх крепăçĕ, 1937 çул вĕçне палăрмалах тата ытларах хăватлăн çирĕпленнипе тухрĕ", тесе кăтартса парат. „Совет Сойузĕ,—тесе çырат хаçат,—социалисăм строителствинче калама çук пысăк çĕнĕ çитĕнӳсем турĕ. Унăн шалти пурнăçĕ ССР Сойузĕн Аслă Совет суйлавĕнче пулнă социалисăмлă демократийе пурнăçа кĕртнипе паларса тăрат. Совет Сойузĕ хăйĕн халăхĕ сыхăлăхлă пулнине фашисла агентсене, диверсантсене тата шпионсене тĕп тумалах çапса хуçса вăрçă пуçланиччен малтан пысăк çĕнтерӳ турĕ".

Хаçат „Совет Сойузĕ пысăк çĕнтерӳсем туниле пĕтĕм тĕнчери пурнăçра, демократипе лăпкă çаманана сыхлас ĕçре малала та тата питĕ пысăк та кирлĕ вырăн йышăнса тăмала", тесе кăтартса парат. (ТАСС).

Совет Сойузĕпе Франци тунă суту-илӳ килĕшĕвĕ

1937 çулти декабĕрĕн 31-мĕшĕнче ССР Сойузĕпе Франци хушшинче 1936—37 çулсенче тунă суту-илӳн вăхăтлăх килĕшӳне 1938 çула тăснă.

Килĕшĕве иртнĕ условисем тăрăх тăснă: ССР Сойузĕ Францине мĕн чухлĕ тавар сутмалине, Совет Сойузĕн таварĕсене Францине сутнăшăн паракан таможеннăй љготăсем мĕн чухлĕ пулмалине пăхнă. (ТАСС).

Германири фашисăма хирĕçле листовкăсем

БЕРЛИН, йанварĕн 2-мĕш. Берлинра çĕнĕ çул тĕлне фашисăма хирĕçле листовкăсемпе брошӳрăсем салатнă. Вăл листовкăсемпе брошӳрăсем çĕршыври економикăлă чухăнлăхăн сăлтавĕсене уçса кăтартаççĕ, фашисла демагогине тата вăрçа хатĕрленес политикăна тăрă шыв çине кăлараççĕ, фашисла диктатурăна хирĕç кĕрешме чĕнеççĕ.

„Почтăпа йатарласа халăха чĕнсе калани çыру йанă. Çав чĕнсе каланă çырура: „Çак кунсенче Берлинра „фашисла диктатурăна хирĕç кĕрешме мĕн пур оппозицилĕ йухăма пĕрлештерессипе" пĕтĕм Германири пĕрремĕш сйес пулса иртрĕ", тесе каланă. Сйесра, чĕнсе каланинче кăтартнă тăрăх, çĕршывăн пĕтĕм кĕтесĕсенчен, Хĕвелтухăç Пруççисĕр пуçне, 37 делегат пулнă. „Хаљхи режимăн,—тенĕ чĕнсе каланинче,—Германире халĕ ĕнтĕ пĕрлешнĕ противник пур. Епĕр фашисăма кĕрешӳве чĕнтĕмĕр. Нумай тăмаст, фашисăм пирĕнпе ĕç пуçарат. Епĕр Германийе вăрататпăр".

Чĕнсе калانине „оппозицилĕ йухăмсен пĕтĕм Германири конгресĕ" алă пуснă. (ТАСС).

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Советĕнче

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1937 çулăн декабĕрĕн 21-мĕшĕнче йышăннă постановленийĕ тăрăх, 1938 çулти йанварĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа республикă талкăшĕнче ĕçпе командировкăпа кайакансене хватер укçи тӳлемешкĕн укçа ӳстерсе панă. Çав постановлени тăрăх, ĕçпе командировкăра пулакансене хватер укçи тӳлеме 5 тенкĕ параççĕ, документсем тăратсан — тунă тăкакшăн пĕтĕмпех тӳлемеле, анчах суточнăй укçаран 40 процентран ытла ӳстермеле мар.

Ответлă редактор заместителĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

1938 çулшăн çырăнса илмели илемлĕ литература тата общественлă-политикалă журналсем

ПСÇЛКС Тĕп Комитечĕ çумĕнчи „Молодая Гвардия" издателстви кăларат.

„Молодая Гвардия"

ПСÇЛКС Тĕп Комитечĕн илемлĕ литературă, общественлă-политикалă тата пурне те ăнланмала аслăлăх журналĕ. Кашни уйăхра пĕр номер тухат. Журналта—романсем, калавсем, повĕçсем, очерксем, сăвăсем, йутçĕршывсенче тата хамăр çĕршывра мĕн пулса пынине çутатнисем çапăнса пыраççĕ.

ÇЫРАНСА ИЛМЕЛИ ХАК: 12 уйăха—30 тенкĕ, 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 тенкĕ те 50 пус. Уйрăм номер—2 тенкĕ те 50 пус.

„Известия ЦК ВЛКСМ"

ПСÇЛКС Тĕп Комитечĕн органĕ, уйăхра икĕ хут тухат. Облаçри, округри, хулари, районри комсомол активĕ валљи, ПСÇЛКС комитечĕсен секретарĕсене валљи тата ытти ответлă вырăнсенче ĕçлекен комсомолецсене валљи тухса тăрат.

ÇЫРАНСА ИЛМЕЛИ ХАК: 12 уйăха—8 тенкĕ те 40 пус, 6 уйăха—4 тенкĕ те 20 пус, 3 уйăха—2 т. 10 пус. Уйрăм номер—35 пус.

„Молодой колхозник"

ПСÇЛКС Тĕп Комитечĕн илемлĕ литературă тата массăлă-политикалă колхоз çамрăкĕсене валљи тухакан журнал. Уйăхра пĕр номер тухат. Журналта—калавсем, сăвăсем, пропагандиссемпе агитаторсене кашни кунхи ĕççенче кирлĕ пулакан материалсем пичетленсе пыраççĕ.

Ку журнал колхоз çамрăк интелигенцийĕ—учителсем, агрономсем, врачсем тата ыттисем валљи тухса тăрат.

ÇЫРАНСА ИЛМЕЛИ ХАК: 12 уйăха—9 тенкĕ, 6 уйăха—4т. 50 пус, 3 уйăха—2 т. 25 пус. Уйрăм номер—75 пус.

„Вожатый"

ПСÇЛКС Тĕп Комитечĕн органĕ, çамрăк пионер отрйачĕсен вожатăйĕсем валљи уйăхра пĕрре тухакан журнал.

ÇЫРАНСА ИЛМЕЛИ ХАК: 12 уйăха—7 тенкĕ те 20 пус, 6 уйăха—3 т. 60 пус, 3 уйăха—1 т. 80 пус. Уйрăм номер—60 пус.

„Комсомольский пропагандист и агитатор"

ПСÇЛКС Тĕп Комитечĕн органĕ, кашни вунă кунра пĕр номер тухат. Ку журнал ПСК(б)П историне анлăн çутатса пырат, кашни кун пулса пыракан политикăлă ĕçсем çинчен, йутçĕршывсенчи лару-тăрусем çинчен кирлĕ материалсене пичетлесе пырат. Пропагандиссемпе агитаторсене интереслентерекен пур ыйтусене те тĕплĕн çутатса парат.

ÇЫРАНСА ИЛМЕЛИ ХАК: 12 уйăха—5 тенкĕ те 40 пус, 6 уйăха—2 т. 70 пус, 3 уйăха—1 т. 35 пус. Уйрăм номер—15 пус.

„Детская литература"

ПСÇЛКС Тĕп Комитечĕн критикăлă-библиографилĕ, икĕ ернере пĕрре тухса тăракан журнал. Журнал—ача-пăчасем валљи литературă çыракан писателсене, педагогсене, библиотекарсене, студентсене валљи тухса тăрат.

ÇЫРАНСА ИЛМЕЛИ ХАК: 12 уйăха—24 тенкĕ, 6 уйăха—12 тенкĕ, 3 уйăха—6 тенкĕ. Уйрăм номер 1 тенкĕ.

Подпискă укçине—КОГИЗ-ăн пур уйрăмĕсем, магазинĕсем, киоскисем, уполномоченнăйсем йышăнаççĕ. Тата почтаљйонсем, учреждениссенче, предприйатисенче подпискă пухакансем йышăнаççĕ.

Вăрманпродторгăн Шупашкарти кантурĕ

(Малтан ОРС пулнă)

Руководствăна çĕнетнĕ май пур организацисене, уйрăм çынсене (Малтан ĕçленĕ рабочисемпе служашчисене) Шупашкарти Вăрманпродторгран укçа-тенкĕ илес пирки претензисем пур пулсан, претензисене 1938 çулхи йанварĕн 15-мĕшĕччен тăратма ыйтат.

Йанварĕн 15-мĕшĕ иртсен претензисене йышăнмаççĕ.

ДИРЕКЦИ.

3—1

ЙАЛХУÇАЛĂХ БАНКĔН ЧĂВАШ КАНТУРНЕ

Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ системин бухгалтери учотне тата йалхуçалăхне пĕлекен

ЕКОНОМИСТ КИРЛĔ

3—3

ЧĂВАШМЕЉТРЕСТА

трест аппаратĕнче тата предприйатисенче ĕçлеме кирлĕ:

Стажлă механиксем
тата машинистсем
Економист-плановик
Квалификацилĕ мељниксем
тата кĕрпе çуракансем
Бухгалтерсемпе
счетоводсем
Бухгалтер-ревизор.

Çак адреспа пымала: Шупашкар, Урицки урамĕ, 13. Телефон № 2—16.

5—3

Чăвашполиграфтреста ОПЫТЛĂ ЕКОНОМИСТСЕМ ТАТА БУХГАЛТЕР-РЕВИЗОР КИРЛĔ

Ĕçукçи килĕшӳ тăрăх.

Адрес: Шупашкар хули, Пичет çурчĕ, тăваттăмĕш хутлăх, 35-мĕш пӳлĕм.

3—1

Академи театрĕнче

Йанварĕн 4-мĕшĕнче

Чăвашла спектаклљ

Биљ-Белоцерковский

„ПОГРАНИЧНИКИ"

(10 картинăлă)

Режиççор Н. С. АЙЗМАН лартат.

Талон № 72. Абонемент № 5.
Талон № 1.

Шупашкарти електростанци

пур предприйатисене, учреждениссене тата организацисене кăçалхи декабĕрĕн 25-мĕшĕччен

електроенерги моторсене валљи тата çуртсене çутатма мĕн чухлĕ кирлĕ пулассии çинчен, кашни кварталшăн уйрăм кăтартса

зайавкăсем тăратма ыйтат

Зайавкă паманнисем 1938 çулта електроенергипе усă кураймаççĕ.

3—2

„Чăваш Коммунĕ" çырăнса илмели хаксем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алсырăвĕсене каялла памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 1. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 2. Тираж 1370. 53—52 см. 1—1 п. л.

6